АУ «Республиканский центр народного творчества «ДК тракторостроителей» Минкультуры Чувашии

Информационно-аналитический отдел

**Серия «Копилка опыта»**
**Вып. 1**

# Театр, любимый народом

***Сборник работ республиканского конкурса культурно-массовых мероприятий, посвященных 100-летию со дня основания Чувашского государственного академического драматического театра им. К.В. Иванова***

**Чебоксары**
**2018**

Компьютерный набор и верстка: В. В. Дилек
Редактор: В. Н. Сорокин
Отв. за выпуск: С.В. Кузнецов

**Театр, любимый народом** : сборник работ республиканского конкурса культурно-массовых мероприятий, посвященных 100-летию со дня основания Чувашского государственного академического драматического театра им. К.В. Иванова / АУ «Республиканский центр народного творчества «ДК тракторостроителей» ; сост. В. В. Дилек. – Чебоксары, 2018. – 55 с.

*В сборнике собраны сценарии конкурсных работ, поступивших на республиканский конкурс культурно-массовых мероприятий «Театр, любимый народом».*

*Предназначен для специалистов культурно-досуговых учреждений.*

© АУ «Республиканский центр народного творчества
«ДК тракторостроителей» Минкультуры Чувашии, 2018

## Содержание

От составителя.........................................................................................4

Раздел I. Номинация «Лучшее культурно-массовое мероприятие культурно-досугового учреждения муниципального района (городского округа)»………………………………………………6

1.1 Районный Дом культуры автономного учреждения «Централизованная клубная система» Аликовского района Чувашской Республики……………………………………………6

1.1.1 Судман Алина Яковлевна, Афанасьева Инна Витальевна, Протасов Роман Васильевич. Тематический вечер «100 çул иртсен…»……..........................................................................6

1.1.2 Афанасьева Инна Витальевна, Иванов Сергей Львович, Якимов Алексей Анатольевич. «Не так живи, как хочется»: спектакль по пьесе А. Островского…………………………..…13

Раздел II. Номинация «Лучшее культурно-массовое мероприятие культурно-досугового учреждения сельского поселения»………46

2.1 Юськасинский сельский Дом культуры Моргаушского района. Егорова Надежда Изосимовна, Семенова Марина Александровна. Юбилейный творческий вечер заслуженного артиста Чувашской Республики Аркадия Алексеевича Андреева…………………..…46

2.2. Юнгинский сельский Дом культуры Моргаушского района. Кудряшова Людмила Меркурьевна, Толстова Лариса Павловна. Вечер отдыха «Яланах театр» (Всегда театр)…………………...50

2.3 Малокамаевский сельский клуб Мариинско-Посадского района Николаева Эльвира Анатольевна. Литературно-музыкальный вечер «Манăн чунра эсĕ – театр!»……………………………………...53

## От составителя

100-летию со дня основания Чувашского государственного академического драматического театра им. К.В. Иванова был посвящен республиканский конкурс культурно-массовых мероприятий «Театр, любимый народом», организованный Республиканским центром народного творчества «ДК тракторостроителей» Минкультуры Чувашии в 2017 г.

Мероприятия, посвященные юбилейной дате, прошли во всех муниципальных районах и городских округах. На конкурс поступило 16 заявок из культурно-досуговых учреждений 9 муниципальных районов и городов Чувашской Республики.

В номинации «Лучшее культурно-массовое мероприятие КДУ муниципального района (городского округа)» награждены дипломами:

I степени - Районный Дом культуры автономного учреждения «Централизованная клубная система» Аликовского района Чувашской Республики;

II степени - Районный Дом культуры Автономного учреждения «Централизованная клубная система» Красночетайского района Чувашской Республики

III степени - Муниципальное автономное учреждение культуры «Дворец культуры «Восход» г. Шумерли;

в номинации «Лучшее культурно-массовое мероприятие КДУ сельского поселения» награждены дипломами:

I степени - Юськасинский сельский Дом культуры Муниципального бюджетного учреждения культуры «Централизованная клубная система» Моргаушского района Чувашской Республики;

II степени - Юнгинский сельский Дом культуры Муниципального бюджетного учреждения культуры «Централизованная клубная система» Моргаушского района Чувашской Республики;

III степени - Малокамаевский сельский клуб Муниципального автономного учреждения культуры «Централизованная клубная система» Мариинско-Посадского района



*Награждение победителей конкурса в рамках праздничных мероприятий, посвященных 100-летию со дня основания Чувашского государственного академического драматического театра им. К.В. Иванова 27 января 2018 г.*

На сцене Чувашского государственного драматического театра им. К.В. Иванова слева направо:

- Семенова Марина Александровна, зав. Юськасинским сельским Домом культуры Моргаушского района;
- Судман Алина Яковлевна, зав. информационно-методическим отделом автономного учреждения «Централизованная клубная система» Аликовского района;
- Нина Михайловна Яковлева – актриса театра, заслуженная артистка Чувашской Республики и Российской Федерации, народная артистка Чувашской Республики и Российской Федерации.
- Григорьева Нина Ильинична – актриса театра, заслуженная артистка Чувашской Республики и Российской Федерации, народная артистка Чувашской Республики и Российской Федерации.

**Раздел I. Сценарии номинации «Лучшее культурно-массовое мероприятие культурно-досугового учреждения муниципального района (городского округа)»**

**<u>Районный Дом культуры автономного учреждения «Централизованная клубная система» Аликовского района Чувашской Республики</u>**

Судман Алина Яковлевна, Афанасьева Инна Витальевна, Протасов Роман Васильевич.

**«100 çул иртсен…»: К. В. Иванов ячĕллĕ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ чăваш патшалăх академи драма театрĕ 100 çул тултарнине халалланă тематикăлла кану каçĕ.**

**Чаршав хупă.**
**Илемлĕ кĕвĕ янăрать.**

**Ертсе пыракан:** Чăваш театрĕ! Çĕр-çĕр çынна пĕр çĕре пухатăн та эсĕ илемӳпе тыткăнлатăн. Эсĕ – асамçă, пархатарлăх шкулĕ.

Кашни каç куракансем чаплă кермене пуханаççĕ. Кашни каç кĕтнĕ самант çитет – чаршав уçăлать.

**Чаршав уçăлать. (Сцена çинчи экран çинче текстпа килĕшӳллĕ фотокадрсем тухса пыраççĕ).**

**Ертсе пыракан:** Пуçласа Чăваш театрĕн чаршавĕ 100 çул каярах уçăлнă пулнă. Кам çирĕплетсе калама пултарнă-ши ун чухне чăваш сăмахĕпе юрри-кĕвви, чăваш искусстви чĕрĕлĕ те паянхилле хитрен чечекленĕ тесе?

1918 çулхи январĕн 27-мĕшĕ. Хусан. Ĕлĕкрех купцасен клубĕ пулнă çурта хĕрлĕ гвардеецсемпе рабочисем, тĕрлĕ çĕрте ĕçлекенсемпе вĕрентекенсем пырса тулнă. Пурте хаваслă. Залра саламлă сăмахсем илтĕне-илтĕне каяççĕ: «Сывă пултăр Чăваш театрĕ!» Сцена çинче – халиччен пулман япала! – чăваш спектаклĕ пуçланать. Артисчĕсем – Иоаким Максимов (Кошкинский), Ольга Тихонова (Ырзем), Петр Осипов, Ева Терентьева, Анастасия

Ананьева, Пелагея Порфирьева, Елена Миронова… Пурте вĕсем чăвашла тумланнă, чăвашла калаçаççĕ, чăвашла юрлаççĕ. Ку калама çук килĕшет куракансене. Çамрăксем А. Островскин «Хăв пурнас тенĕ пек ан пурăн» пьесине чăвашла куçарнă. Çĕнĕ спектакль залри халăха мĕн чухлĕ савăнăç, мĕн чухлĕ хĕпĕртӳ парнеленĕ. Вĕсем пирвайхисем пулнă.

1920-мĕш çулта, Чăваш автономиллĕ облаçне туса хурсан, Чăваш патшалăх театрне Шупашкарта йĕркелеме йышăнаççĕ. Çавна май Хусантан чăваш артисчĕсен ушкăнне чĕнсе илеççĕ.

1933-мĕш çулта çамрăк коллектив академи театрĕ ятне илме тивĕçлĕ пулать. Çав çултах театра никĕсленĕ И. С. Максимов – Кошкинский режиссера Чăваш халăх артисчĕ ятне параççĕ.

1959-мĕш çулта театр чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов ячĕпе хисепленме тытăнать.

Театр искусствине аталантарас тĕллевпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн театра СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 1977-мĕш çулхи декабрĕн 29 – мĕшĕнче Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

К. И. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш академи драма театрне – 100 çул. Халь вăл нихçанхинчен те хавхалануллă, унăн репертуарĕ пуян, сасси уçă, калас сăмахĕ витемлĕ.

Сцена çине Любовь Аркадьевна Шашкинăна чĕнетпĕр. Вăл театр çĕр çул тултарнине халалласа çырнă сăвва парнелĕ.

**Л. Шашкина сăвă вулать. (Экран çинче сăвăпа килĕшӳллĕ фотокадрсем тухса пыраççĕ.)**

Театр 100 çулта. Нумай-и вăл пĕр ĕмĕр?
Кашнин хуравĕ пулĕ тĕрлĕрен:
Вăл вăхăт юххинче самант кăна, туссемĕр,
Чылай – этем кун-çулĕпе виççен.

Чăвашлăх управне театр йĕркеленнĕ,
Хусан хули – ун малтанхи сăпки.
Шупашкара куççассăн тĕрекленнĕ,
Çак вăхăтра çуках пуль ун пекки.

Максимов-Кошкинский – пĕрремĕш режиссерĕ,

Валерий Яковлев паян руль умĕнче.
Пĕр ĕмĕр хушшинче пулнах ырри, синкерĕ,
Театр халĕ – ытарми тĕнче.

Вуншар артист Раççей шайне çĕкленнĕ
Чун-чĕрипе вут пек çунса тăрса.
Кунтах Кĕлпук мучи ĕçе çӳренĕ,
Праски аппа ташлать хĕрне парса.

Ак Кузьмина – хĕрӳ чĕреллĕ Амăш
Гарсиа Лоркăн «Юнлă туйĕнче».
Ав «инкесем» юрлаççĕ акăш-макăш,
«Хура хăмла çырли çатан çинче…»

Кашни - ăста, хăй евĕр пултарулăх,
Ăçтан пурне çитерĕн асăнса.
Утать мала театр пит хăюллăн
Куллен кураканне чунтан савса.

Чаршав хуллен уçăласса кĕтетпĕр,
Асам тĕнчи илет ытамласа.
Кулатпăр, юрататпăр та йĕретпĕр –
Чунсем пыраççĕ мар-и тасалса?

Йăлт вĕçленсен çут Атăл хумĕ евĕр
Ал çупăвĕ кĕрлет театрта.
Куракансем, эпир, йăлтах сисетпĕр -
Артистăн чунĕ- çунакан çурта.

Тата çĕршер çулсем, Театр, пурăн,
Саманапа пĕрле утса пĕр тан.
Сăваплă ĕç-хĕлне пиллетĕр Турă,
Куракану ан иксĕлтĕр нихçан.

Паян эс 100 çулта! Нумай-и ку, туссемĕр?
Кашнин хуравĕ пулĕ тĕрлĕрен.
Эс халăхпа пĕрле пул ĕмĕр-ĕмĕр,
Чыслать сана халь пĕтĕм Чăваш ен!

**Ертсе пыракан:** Элĕк тăрăхĕ те чăваш наци культурине аталантарма чылай пултаруллă яшсемпе талантлă пикесем парнеленĕ. Вĕсен ячĕсем Элĕк тăрăхĕнче кăна мар, пĕтĕм Чăваш Республикинче паллă та сумлă пулса тăчĕç.

Театрта пĕрремĕш утăм тăвакансемпе пĕрле юнашар пирĕн ентеш - Сурăмварри ялĕнче çуралнă Дмитриева Фекла Дмитриевна пулнă. Сцена çинчи псевдонимĕ – Эдюка. Чăваш театрĕн пĕрремĕш труппинче 1918-1920-мĕш çулсенче вылянă. К.В.Ивановăн «Нарспи» спектаклĕнче Нарспи рольне, П.Осиповăн «Айтар» спектаклĕнче - Пинерпи, Ф. Шиллерăн «Коварство и любовь» спектаклĕнче - Луиза К. Унсăр пуçне Н.В. Гоголь, Л.Н. Толстой произведенийĕсем тăрăх лартнă спектакльсенче вылянă.

Элĕк тăрăхĕнчен тухнă тата ытти паллă та сумлă театр ĕçченĕсем – Чăваш патшалăх оперăпа балет театрне пуçараканĕ Борис Семенович Марковпа оперăпа балет солистки пулнă Зоя Захаровна Андреева, К. И. Иванов ячĕлле чăваш патшалăх академи драма театрĕн пултаруллă çамрăк артисчĕсем Елизавета Геннадьевна Хрисанфова, Надежда Геннадьевна Кузьмина, Арсентий Владимирович Димитриев. Элĕк районĕнчен тухнă артистсем чăваш театр искусствинче мĕнле йĕр хывни çинчен, вĕсен пултарулăхĕсемпе çитĕнĕвĕсем çинчен Чăваш Республикин культурă тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Любовь Михайловна Константинова каласа парĕ.

**Константинова Л.М. ачасемпе сцена çине тухать. Ачасен ыйтăвĕсене хуравласа Элĕк районĕнчен тухнă артистсем çинчен каласа парать.**

**(Экран çинче Элĕк районĕнчен тухнă артистсен сăнӳкерчĕкĕсемпе спектакльсенчи рольсенчи фотокадрсем тухса пыраççĕ.)**

**Ертсе пыракан:** Çавăн пек анлă тавракурăмлă, театрпа кăсăкланакан ачасем хăйсен пĕрремĕш утăмĕсене ялсенчи культура çурчĕсенче тăваççĕ те театр искусствин анлă çулĕ çине тухаççĕ. Пирĕн ентеш Лиза Хрисанфова та хăйĕн пĕрремĕш утăмĕсене, паллах, Тени культура çуртĕнче тунă. Кунти ял халăхĕ театрпа паянхи кун та питĕ туслă.

Сцена çине Тени культура çурчĕн театр ушкăнне чĕнетпĕр.

Вăсем Аркадий Эсхел çырнă «Сăпса йăви» пьеса тăрăх лартнă спектаклĕн сыпăкне кăтартĕç.

**А.Эсхел çырнă «Сăпса йăви» пьеса тăрăх лартнă спектаклĕн сыпăкĕ.**

**Спектакль сыпăкĕ хыççăн Алина Фёдорова юрлакан «Сцена» юррипе усă курса çырнă «Элĕк районĕнчи театрăн кунçулĕ» видеоролик каfive.**

**Ертсе пыракан:** Çавăн пек маттур, пархатарлă, чунпа пуян çынсем нумай пирĕн сцена çинче. Унсăр пуçне вĕсене хавхалантаракансем, вĕсем çинчен çыракансем те сахал мар пирĕн район çĕрĕ çинче. Вĕсенчен пĕри – Любовь Аркадьевна Шашкина. Театра халалласа çырнă сăввине итлеме тӳр килчĕ ĕнтĕ пире паян. Тата халĕ хамăр ентеш Алина Федорова юрланă юрра итлерĕр. Ку юррăн сăмахĕсем те Любовь Аркадьевнăн.

Тата тепĕр талантлă, чунĕпе тĕлĕнмелле пуян çынна чĕнес килет халĕ сцена çине. Георгий Петрович Павлов Вера Кузьминана халлалласа çырнă сăввине пире парнелĕ.

**Г.Павлов Вера Кузьминана халлалласа çырнă сăвва вулать. (Экран çинче Вера Кузьмина вылянă спектакльсенчи рольсенчи фотокадрсем тухса пыраççĕ).**

**Ертсе пыракан:** Вера Кузьминична артистка ятне пĕлмен çын республикăра çук та пулĕ. Чăваш академи драма театрĕнче вăл 1947 çултанпа ĕçлет. Çав хушăра пултаруллă артистка çĕре яхăн роль вылярĕ, сценă çинче халăха çĕре яхăн тĕрлĕрен хĕрарăм сăнарне тарăннăн уçса пачĕ. Вăл вылянă чухне куракансем хушшинче кулакансем те, йĕрекенсем те, хăйсем ăçта ларнине манса тарăхакансем те, ылханакансем те пайтах пулчĕç.

Сăнарсем, сăнарсем, сăнарсем… Тĕрлĕ самантри, тĕрлĕ вăхăтри тĕрлĕ çын «ăшне» кĕрсе тĕрлĕ «кĕрĕк» пĕркенсе курнă Вера Кузьминична. Хăйне шанса панă кашни ролех пурнăç хăватне вĕрсе кĕртнĕ.

Вера Кузьминична чун панă сăнарсем хушшинче трагедиллисем те, драмăллисем те, комедиллисем те пур. Тĕрлĕ

характерлă, тĕрлĕ сулăмлă хĕрарăмсен сăнарĕсенчен шалтан çунса тухакан чи пысăк сăнар – амăшĕн сăнарĕ. Ăна сăнарлама пĕтĕм пурнăç пархатарне, ăс-хакăл пуянлăхне, чун илемне хывмалла артисткăн.

Хĕрарăмăн сăпайлăхне тата чăтăмлăхне ĕненӳллĕ кăтартать Вера Кузьмина амашĕн ролĕсенче: П.Осиповăн «Айтарти» Сентнер амăшĕ, «Çĕпĕр дивизийĕнчи» Хветура, «Юнлă туй», «Çатан карта çинчи хура хăмла çырли».

Чуна тивекен рольсенчен пĕри - «Лар аннеçĕм, юнашар» спектакльти Ненила ролĕ. Çак спектаклĕн пĕр сыпăкне Мăн Вылă культура Çурчĕ çумĕнчи халăх театрĕн артисчĕсем сирĕн ума кăларĕç. Ненила ролĕнче Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Альбина Иванова вылять.

**«Лар аннеçĕм, юнашар» спектакльти сыпăк. Мăн Вылă культура Çурчĕ çумĕнчи халăх театрĕн артисчĕсем выляççĕ.**

**Ертсе пыракан:** Чăваш театрĕн артисчĕсем калăплакан паллă сăнарсем куракансен чĕринче нумайлăха юлаççĕ. Пĕр ӳстермесĕр калама пулать: чăваш артисчĕ – ыттисемшĕн паха тĕслĕх, эталон. Çак тĕслĕх çинче тытăнса тăрать те пуласлăх.

Театр пуласлăхĕ вара çамрăк талантсенче. Çавăн пек çамрăк талантсене чĕнсе кăларас килет те паянхи кун çак сцена çине. Вĕсенчен пĕри Валерия Лазарева – Юхма Мишши çырнă «Пукане» юмах тăрăх лартнă спектакльти пĕчĕк сыпăк. Ку юмах-спектакле куракансем умне Элĕкри халăх театр çумĕнчи ачасен театр студийĕ кăларнă.

**«Кушак юрри». «Пукане» спектакльти сыпăк. Элĕкри халăх театр çумĕнчи ачасен театр студине çӳрекен Валерия Лазарева юрлать.**

**Ертсе пыракан:** Тата тепĕр пĕчĕк талант тухать халĕ пирĕн умма. Ку вăл – Ева Леонтьева. Вăл вулакан «Çĕвĕç» юптару сире килĕшессе шанас килет. Кĕтсе илетпĕр.

**Ева Леонтьева «Çĕвĕç» юптару вулать.**

**Ертсе пыракан:** Кĕрсе çитсен чăваш театрне,

Кĕрейнĕн сарă кунăн çĕршывне!
Театр хăйĕн тыткăнне илет,
Кунта ĕмĕтпеле чăн пурнăç пĕрлешет.
Артист! Эс юмахри асамçă пуль.
Сив чунсенчен те кăларан куççуль.
Пултарăн эсĕ вилмеллех хĕртме
Пултарăн вилнине те кĕç чĕртме.
Ĕçӳ сан пархатарлă!
Çун, артист!
Кураканран сана хисеп те чыс!

**Стас Владимиров репертуарĕнчи «Эпĕ пĕчĕкçĕ тумлам» юрра Сергей Иванов юрлать.**

**Ертсе пыракан:** Константин Васильевич Иванов ячĕллĕ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ, тав сана!

Тĕлĕнтермĕш театр! Çĕр-çĕр çынна пĕр çĕре пухса илемӳпе тыткăнлама ан пăрах, нихăçан ан сӳнтĕр санра пурнăç хĕлхемĕ, çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсемпе хаваслантар пире.

Ĕмĕр пурăн!

**Районный Дом культуры автономного учреждения «Централизованная клубная система» Аликовского района Чувашской Республики**

Афанасьева Инна Витальевна, Иванов Сергей Львович, Якимов Алексей Анатольевич.

# ХĀВ ПУРĀНАС ТЕНĔ ПЕК АН ПУРĀН
# НЕ ТАК ЖИВИ, КАК ХОЧЕТСЯ:
## спектакль по пьесе А. Островского

**Выляксансем:**
**ИЛЬЯ ИВАНОВИЧ** – пуян купса.
**ПЕТР** – унăн ывăлĕ.
**ДАША** – Петр арăмĕ.
**АФИМЬЯ** – Петр мăнакăшĕ.
**АГАФОН** – уес хулинчи мещен.
**СТЕПАНИДА** – Агафон арăмĕ.
**ВАССА** – çамрăк каччă, купса ывăлĕ.
**СПИРИДОНОВНА** – иртен-çӳрекене хваттере кĕмелли çурта тытаканĕ.
**ГРУША** – унăн хĕрĕ.
**ЕРЕМКА** – тимĕрçĕ.
**ЯКОВ** – ямшăк.
**ИВАН** – Петр патĕнче ĕçлекен йĕкĕт.

**ХĔРСЕМПЕ КАЧЧĀСЕМ.**

Драмăри ĕçсем 18 ĕмĕр вĕçĕнче Мускавра, çăварни эрнинче пулса иртеççĕ. Пьесăна халăх халапĕсем тăрăх çырнă.

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Вырăс кил-çуртĕнчи пӳлĕм, сулахайра икĕ чӳрече, хыçалта алăк, сылтăм енче тепĕр алăк, стена çуммипе саксем, сулахайра йывăç сĕтелпе тенкел.

**Пĕрремĕш курăну**

Афимья тата Даша.

АФИМЬЯ (васкамасăр). Сисет манăн чĕре… Ырра мар сисет!.. Āçтан ыррине кĕтмелле? Кил-çуртра пĕр килĕшӳ те, пĕр йĕрке те çук-çке. Пирĕн пӳтсĕр пурнăçа кура турри те пирĕнтен уйрăлчĕ

пулас. Турӑ умӗнче пӗр-пӗр ҫылӑхпа айӑпа кӗнӗшӗн ку наказани Петр Ильича, хамӑрӑн мӑнкӑмӑллӑхшӑн. Ют ҫын йӗркесӗр пурӑнни ҫинчен каланине итлеме чӗрем ҫурӑлсах тухать те, кунта, калама хӑрушӑ, хамӑр ача!.. арлӑ-арӑмлӑ пулнӑскер!.. Юрать амӑшне турӑ вӑхӑтра пуҫтарса кайрӗ, унсӑрӑн мӗнле чунпа курнӑ пулӗччӗ-ши? Ашшӗ сӑмахне хӑнт! та тумасть, арӑмне хӗне каларчӗ!..Кама хыврӗ-ши? Халӗ ҫылӑх каҫарттармалли кунсем, ют ҫынсем пӗр-пӗринпе килӗшӳ тӑваҫҫӗ, вӗсен пур ҫывӑрма выртсан та хирӗҫӳ, ҫывӑрса тӑрсан та харкашу. Халиччен ӑҫта ҫапкаланса ҫӳрет-ши? Кӑнтӑр апатне кӗтрӗмӗр – кӗтсе илеймерӗмӗр. Ҫӑварни эрнине тухнӑранпах пӗрмай ӗҫет, пӗрмай сӗрӗм тивнӗ ҫын пек аташса ҫӳрет. Ашшӗ вӗсем мӗнле пурӑннине пӗлме ятарласа килнӗ – вӗсем ӑна савӑнтарчӗҫ. Хӑналанас вырӑнне киле пуҫтарӑнать.

ДАША. Ан кала-ха, мӑнакка, ахаль те ӑш вӑркать.

АФИМЬЯ.Каламасӑр! Тӗрӗс мар-им?

ДАША. Мӗн тӑвас-ха ман, мӑнакка, мӗн тӑвас? Хӑй мана ют ене вӑрласа килчӗ те.

АФИМЬЯ. Упӑшки аякка чупать пулсан мӗнле арӑм вӑл?

ДАША. Асапланса пӗтрӗм эпӗ унпа йӑлтах, чӗрене кӑларсах илчӗ! Ашшӗне итлеменскер, мана итлет-и?

АФИМЬЯ. Эсӗ унӑн арӑмӗ, ҫичӗ ют мар.

ДАША. Халӗ эпӗ унран ҫичӗ ютран та ют.

АФИМЬЯ (васкамасӑр). А̄раскалсӑр ҫуралнӑ пулӗ эсӗ, Даша. Пирӗн киле те эсех инкек илсе килтӗн пулас. Чӑнах ҫапла пуль.

ДАША. Эпӗ мар инкек илсе килекенни. Петр Ильич мана юратнӑ чухне аванах пурӑнаттӑмӑр, сивӗнчӗ те – турӑ пӗлет-и мӗн пулчӗ унпа, ӗҫме-чупма пуҫларӗ.

АФИМЬЯ. Эс унпа ху арӑм пулнӑ пек пулсан, тен, капла пулмастчӗ. Эсӗ мӗнле пурӑнатӑн? Турӑ каҫартӑр та сӑмаха, эсӗ унпа арӑм пек мар, еркӗн пек пурӑнатӑн. Пыратӑн та мӑйӗнчен уртӑнатӑн. Арӑма апла юрать-и?

ДАША. Унпа мӗн пулнинчен шалтах тӗлӗнмелле. Шухӑшлатӑп, шухӑшлатӑп, тӗпне-йӗрне тупаймастӑп. (Йӗрет.)

Илья Иванович кӗрет.

**<u>Иккӗмӗш курӑну</u>**

Ҫавсемех тата Илья Иванович.

ИЛЬЯ. Дарья, ҫитет, куҫҫульпе турра ан кӳрентер! Пуҫа кассан ҫӳҫшӗн макӑрмаҫҫӗ.

ДАША. Атте, эсӗ ӑҫта пурӑннӑ?
ИЛЬЯ. Каятӑп сирӗн патран. Сире куҫпа та курас килмест, эсир ӑна тивӗҫсӗр. Сирӗн пата пӗр эрнелӗх килсен те авӑра сикнӗ пекех.
ДАША. Ывӑлу киличчен те пулин тӑхта, тӑн пар кӑштах.
ИЛЬЯ. Тӑхтатӑп. Юлашки хут калаҫса пӑхатӑп. Ҫирӗппӗн калаҫатӑп. Пӗтет вӗт! Кун пек пурнӑҫпа пурӑнсан ыррине ан кӗт! Ун пеккисем инкекпе юнашар утаҫҫӗ. Итлесен – итлет, итлемесен хӑйӗн ӗҫӗ, мана, вата ҫынна, канлӗх кирлӗ, хамӑн чун ҫинчен те шухӑшлама вӑхӑт. Шӑллӑм патӗнче мӑнастырте пурӑнма пуҫланӑранпа кӑна ҫутӑ куна куратӑп та. Акӑ халӗ, мӑнастырьтен сирӗн пата килнӗ май, кӑшт кӑна Мускав тӑрӑх утса тухрӑм – мӗн кӑна курмарӑм пулӗ! Халӑх тамӑк хуранӗнче вӗренӗ пек пурӑнать, шавлать, ҫуйӑхать, киревсӗр юрӑсем юрлать! Ав, ӗнер, икӗ вилене урамран пуҫтарса кайнӑ, тет, тепри вакӑра путса вилнӗ. Турра юрӑхла вилӗм-и ку? Кам аллине лекнӗ вӗсем? Мӗнле пурӑнас ку саманара? Йӗри-тавра аскӑнчӑк кӑна. Ав, тӑван ывӑл, вӑл та пулин мӗн тӑвать? Ҫавӑн пек пулма пӑхса ӳстертӗм-и эп ӑна?
Петр кӗрет.
**<u>Виҫҫӗмӗш курӑну</u>**
Ҫавсемех тата Петр.
ИЛЬЯ. Ӑҫта чупса ҫӳрерӗн-ха, ырӑ каччӑ?
ПЕТР. Мускавра кӗрсе тухмалли вырӑн нумай, кӑмӑл кӑна пултӑр.
ИЛЬЯ. Кӑмӑлу тулчӗ-и ӗнтӗ?
ПЕТР. Тӑраниччченех. Эсӗ, атте, ӑҫта пуҫтарӑннӑ?
ИЛЬЯ. Сирӗн патран куҫа хупсах тарас терӗм.
ПЕТР. Мӗн аплах хӑна пуласшӑн мар?
ИЛЬЯ. Сана курса йӑлӑхтарса ҫитерчӗ, ытла йӗркесӗр пурӑнатӑн.
ПЕТР. Мӗншӗн-ха каплах ҫилленетӗн, атте? Мӗнпе сан умӑнта ҫавӑн пекех пысӑк айӑпа кӗтӗмӗр?
АФИМЬЯ. Мӗнпе? Санӑн калас марччӗ, пирӗн илтес марччӗ ку сӑмаха, кӗҫҫе пит.
ПЕТР. Санран, ухмахран, ыйтмаҫҫӗ.
ДАША. Атте сана ӗҫке супнӑшӑн, манпа киревсӗр пурӑннӑшӑн кӳренет.
ПЕТР. Эс мӗн, жалоба патӑн-им?
ИЛЬЯ. Кунта жалоба кирлӗ мар. Мӗн, эсӗ ҫын пек пурӑнманнине хам курмастӑп терӗн-им?
ПЕТР. Эх, пирӗн ҫын пек пурӑнасси иртнӗ пулӗ ҫав… мана шӑпи

çавнашкал лекнĕ пулас.
ИЛЬЯ. Ку тата мĕнле сăмахсем?
ПЕТР. Эх, Даша, пĕтертĕм эп хама санпа! Эсĕ мана ала-урараанах çыхса лартрăн.
ДАША. Эсĕ, эсĕ вăл юнĕçен, эс мана асаплантараканĕ!
ИЛЬЯ. Мĕн эсир? Ман умра? (хаяррăн) Шăп! Эсĕ мĕн, ăсран тухрăн-им? Кам сана ăна качча илме хистенĕ? Никамран ыйтмасăр-тумасăр, вăрласа килтĕн те, халĕ вăлах айăплă эппин! Акă, ваттисем калани çитсе перĕнет те: «Турăран килекен – çирĕп пулнă, шуйттанран килекенĕ – çыпçăнуллă».
ПЕТР. Вăл мана тухатса пуçа çавăрнă… Тухатмăш шывĕ ĕçтернĕ.
ИЛЬЯ. Ан палка кирлĕ мара, сăмахусемпе çылăха ан кĕр. Мĕн тухатламалли пур сана. Ху пуç тĕллĕн хăтланатăн. Çылăх çине çылăх купалатăр, сĕм вăрманта пекех, çылăхран тухма пĕлместĕр.
ПЕТР. Мĕн тăвас-ха манăн, атте? Мĕнле пурăнас?
ИЛЬЯ. Саккун хушнă пек, çынсем пек пурăн.
ПЕТР. Эпĕ, акă, ĕçетĕп. Мĕнех вара? Халĕ çăварни эрни. Мĕн ĕçме те юрамасть-им? Çăварни çулталăкра пĕрре килет. Çынсем мĕнле пурăннипе манăн ĕç çук, эпĕ хам пурнас килнĕ пек пурăнатăп.
ИЛЬЯ. Паллах, хăв ирĕкӳпе пурăнма çăмăлрах, саккун хушнă пек пурăнма йывăртарах: анчах та хăв ирĕкӳпе сакалтака лекетĕн. Ырă çыннăн пĕр çул, аскăнчăкăн вуннă.
ПЕТР. Пур чухне те ĕçместпĕр-ха, вăхăт çитсен эпир те пăрахăпăр, кайран ыттисене те вĕрентĕпĕр; вĕрентме ăсталăх нумай кирлĕ мар. Халĕ, савăнма май пур чух, савăнса юлар. Эсĕ ху та , атте çамрăк пулса курнă пулĕ.
ИЛЬЯ. Мĕнех вара? Е эпĕ сан пек пурăннă-и? Çамрăк пулсан аскăнма юрать имĕш! Çут тĕнчере эпир хаваслăхшăн кăна пурăнмастпăр. Ырă ĕçсене те ватăлсан кăна мар, çамрăклах тăваççĕ. Эс хăвна ил: килте пурăнмастăн, япăх çынсемпе хутшăнатăн, арăмна кӳрентеретĕн. Малалла мĕнле пурăнас пулĕ сирĕн, кала мана?
ПЕТР. Мĕн пулать те çавă пулать, çын ăсĕпе мар, хамăр ăспах мĕнле те пулин пурăнса ирттерĕпĕр-ха.
ИЛЬЯ. Пурăнах эппин! Манăн сирĕн путсĕрлĕхе курас та килмест. Санпа калаçма та хал çитмест. Мĕн калас? Кама калас? Ăсу пулсан татахчĕ, ăссăр çынна вĕрентни те çăвар тутине сая яни çех.
ПЕТР. Ăса паман пулсан сутăн илеймĕн ĕнтĕ. Çукшăн суд та çук.

ИЛЬЯ. Хăвăн ăсу çук пулсан ырă çынсене тăнла, турăран ăс пама ыйт, унсăрăн ăман пекех пĕтетĕн! (тăрать). Чипер, йĕркеллĕ пулатăр пулсан çитес уявра килетĕп, унччен ман пата ан çӳрĕр, тĕлсĕр-мĕнсĕр хускану ахалех йăлăхтарса çитерчĕ. Асту, Петр! Сан умра тĕпсĕр шăтăк. Ĕçкĕ-çикĕпе аскăнчăкра путнă çынран турă пăрăнать, есремет кăна унăн ирĕкĕпе пурăннăшăн савăнать, тытăнать вара хăйĕн хура ĕçне явăçтарма, хаярлăхпа курайманлăха, тухатмăшпе тĕрлĕ усал ĕçе хутшăнтарма. Ун пек çынсен шăпи шуйттанăннипе пĕрех. Суйла, хăшĕ лайăхрах: е тĕрĕс, ăсу кăмăлĕпе, лăпкă чун хавалпа, кил-йышпа шăкăл-шăкăл пурăнма, е хавасла пурăнăçпа çынна култарса, ят илтсе, тăвансене хур, çын тăшманĕсене савăнăç кӳрсе. Асту, Петр, хăрушă кунсем çывхараççĕ. Ак сана ман сăмах, аçун юлашки çирĕп сăмахĕ: тăна кĕр, шутла. Сывă пулăр!
АФИМЬЯ. Çаплах вара тухса каятăн-и? Паян çылăх каçарттармалли кун, пурте пĕр-пĕринчен каçару ыйтаççĕ.
ДАША. Атте, каçар пире. (Чĕркуçленсе пуç таять.)
ИЛЬЯ. Эсир те мана каçарăр.
ДАША. Пехилле пире.
ИЛЬЯ. Сире пехиллеме? Эсир ăна тивĕççĕр. Ман пиле чипер, йĕркеллĕ пурăнма пуçличчен ан кĕтĕр. Лăплантар аçу чĕрине, Петр! Сан пек пурнăçпа пурăниччен пурăнманни аванрах. Пурнăçра ашшĕ пехилĕ кирлĕ, унсăрăн йытă пекех пĕтетĕн. (Каять. Пурте ăна ăсатаççĕ. Афимья ун хыççăн тухать.)

**<u>Тăваттăмăш курăну</u>**

Петр тата Даша. Петр сĕтел хушшине ларать те шухăша каять.
ДАША. Илтрĕн-и, мĕн каларĕ аçу?
ПЕТР. Хăп!
ДАША. (Ун çумне ларса) Итлетĕн-и аçу сăмахĕсене, ĕлĕкхи пек каллех мана юратса пурăнатăн-и?
ПЕТР. Дарья, хăп ман çумран!
ДАША. Кала мана, савнă чунăм, ан пытар, мĕнпе эпĕ сана йăлăхтартăм? Е ачаш мар-и эпĕ санпа, Петр Ильич? Е мĕнпе те пулин çырлахтараймарăм-и? (Петр чĕнмест.) Мĕнпе çиллентертĕм? Петр Ильич, кăвакарчăнăм, кала!
ПЕТР. Хăпатăн-и эсĕ ман çумран е çук?
ДАША. Иксĕмĕр эпир çулталăк кăна пурăнатпăр…
ПЕТР. Дарья!.. (хăмсарать) Çылăха ан кĕрт!

ДАША. Вĕлер мана, вĕлер, ку лайăхрах! Эсĕ юратмастăн пулсан мана та пурнăç кирлĕ мар! Хăвах ачаша вĕрентрĕн вĕт. Малтан савман пулсан, эпĕ хăнăхман та пулăттăм. Астăватăн-и, чунăм, килте ман çине пăхса тăранаймастăнччĕ, уявсенче урама тухсан уйрăлма пĕлместĕмĕр, кунĕпе ыталашса лараттăмăр, ман алăсене вĕçертме пĕлместĕнччĕ, манран куç илейместĕнччĕ. Иртен-çӳрен халăх пире курса савăнатчĕ. Хăвăрт, ытла хăвăрт иртсе кайрĕç çав пирĕн хаваслă кунсем! (йĕрет)

ПЕТР. Мĕн иртнине каялла тавăраймăн.

ДАША. Çапла çав, тавраймăн, анчах эпĕ çав ырă вăхăта манма пултараймастăп, Петя, тен, сана кичем? Эпĕ сана хăв ĕлĕк, хусах чух юрланă юрра юрласа парам-и? (чĕнмеççĕ)

ПЕТР. Хăп! Ан çыхлан, ахаль те кичем.

ДАША. Каласам, мĕншĕн кичем? Мĕншĕн кичем, кала эсĕ мана? Эпĕ саншăн ют çын мар вĕт.

ПЕТР. Хăвăн куççӳлӳсемпе йăлăхтарса çитертĕн, аттене элек панă – акă мĕншĕн кичем. Вăл мана авă мĕнле пуласлăх сунчĕ те – ирĕксĕрех пуçа усан. Эсĕ мĕн, атте ятлаçнă хыççăн эпĕ сана ытларах саватăп терĕн-им? Кĕтсех тăр.

ДАША. Аплах пулсан, ирĕк пар мана киле, атте патне кайма.

ПЕТР. Кăмăлу пулсан ăçта каяс тетĕн, çавăнта кай.

ДАША. Апла пулсан, сывă пул.

ПЕТР. Сывă пул, усаллипе ан асăн, ыррийĕ пулман.

ДАША. Ох, мĕскĕн пуçăм. Ак ăш хыппи.

ПЕТР. Ā̆ш хыппи? Акă ăçта ăш хыппи! Ā̆на шыв сапса сӳнтерейменĕн!.. Эрех парăр! Эрех тенĕ! Часрах!..

**<u>Пиллĕкмĕш курăну</u>**

Çавсемех тата АФИМЬЯ.

АФИМЬЯ. Мĕн сана?

ПЕТР. Эрех пар.

АФИМЬЯ. Эсĕ, ачам, аçу мĕн каланине мантăн та-им?

ПЕТР. Кам хуçа кунта? Эпĕ хам килте-и е хăнара? (ларать) Эрех! (сĕтел çине çапса) Асту, лайăххине илсе кил, паян Çăварни.

АФИМЬЯ. Илсе килетĕп, мĕн çапăçса ларатăн! (ун патĕнчен каять те каллех чарăнса тăрать) Эсĕ арăму çине пăх. Куратăн вĕт, йĕрет-асапланать, чунĕ кăна тухмасть. Çирĕн, çын ĕмĕрне, çирĕн!

ПЕТР. Эй, Иван!

Иван кĕрет.

Хура лашана кӳл, пĕккине эрешле. Çаврăнкала!
ДАША. Кăшт та пулин килте ларасчĕ.
ПЕТР. Мĕн тăвас ман килте, кунта сĕрĕмлĕ.
АФИМЬЯ. Мĕнле сĕрĕм, акă тата мĕн щутласа кăларчĕ!
ПЕТР. Эпĕ сĕрĕмлĕ тетĕп пулсан – сĕрĕмлĕ.
АФИМЬЯ. Каласамччĕ эсĕ, тискер çын, пĕлессĕм килет, мĕншĕн эсĕ арăмна çавăн пекех асаплантаратăн!
ПЕТР. Хуп çăварна, мăнакка!
АФИМЬЯ. Тытатăп та акă каятăп. Пĕрех хут эсĕ мĕн хăтланнине куçăм ан куртăр, чун ан ыраттăр.
ПЕТР. Каях ара, кай, кам сана чарать: тен, сансăрăн йĕрки аванрах пулĕ.
АФИМЬЯ. Йĕрки, йĕрки! Суятăн эсĕ, вăрă-хурах! Санран йĕрке килте пулман та, пулас та çук.
ПЕТР. Эсĕ эрех патне каятăн-и, мăнакка, е каймастăн-и? Эпĕ хам та илсе килме пултаратăп: анчах асту, хăвăра япăх ан пултăр.
ДАША. Хам илсе килетĕп.

**<u>Улттăмĕш курăну</u>**

Петр пĕччен.
ПЕТР. Эх, пуç çурăлсах тухать! Мĕн тумалла? (шухăша каять). Е кăштах усăлса çӳрес? Килте кичем кăна. Хама ал-урараннах çыхса лартрăм! Çак куççуль юхтаракан арăм пулмасан çӳренĕ пулăттăм, кăтартăттăм хам мĕне пултарнине. Маттурлăхĕ манăн вунă çынна та çитет. Тепре каласан, питĕ хавас кунта хĕрарăмсемпе ларма, пуш параппан çаптарма. Мĕн пулать те мĕн килет, çăварни эрнинче ĕçетĕп, çӳретĕп, унтан курăнĕ. Эх, епле пуç ыратать! Çурăлас пекех. Вĕçтерем-ха хуйхă-суйхăна сирме хам чиперккем патне.
Даша кĕрет.

**<u>Çиччĕмĕш курăну</u>**

Даша тата Петр.
ДАША. Ме, Петр Ильич, ĕçни сывлăха пултăр.
ПЕТР. Тасал куç умĕнчен! Кур-ха ăна, епле куçĕсене чарса пăрахнă!.. Эсĕ мана наркăмăш ĕçтерместĕн-и? Ĕçместĕп сан алăри эрехе.
ДАША. Çăва патне сана, чуна кăларсах илетĕн! (эрехе сĕтел çине лартать)
Иван кĕрет.
ИВАН. Лашине кӳлтĕм.

ПЕТР. (Пĕр черкке эрех тултарса ĕçет) Кайрăмăр. (Каять)

**<u>Саккăрмăш курăну</u>**

Даша (пĕччен)

ДАША. Мĕншĕн мана кун пекех асап! Аттепе анне: хĕрĕм пуян та савăнăçлă пурнăçпа пурăнать, теççĕ пулĕ, эпĕ иртен пуçласа каçчен куççӳлпе çăваннине пĕлмеççĕ те. Мĕн тăвас-ха? Пирĕн шăпи çавнашкал – тӳсмелле, тен, аташĕ-аташĕ те хăйех аса илĕ, каллех ман пата килĕ, манăн кăвакарчăнăм. (пĕр вăхăт чĕнмест, юрлать) Енчен, вăл мана пăрахса урăххипе çыхлансан? Кăна чун чăтаймĕ ĕнтĕ. Вăл тăвĕ те. Ун пекех тискер хăтланиччен ман чĕрене туртса кăлартăр та татăкăн-татăкăн вакласа йытта ывăтса патăр.

Васса кĕрет.

**<u>Тăххăрмĕш курăну</u>**

Даша тата Вася.

ВАСЯ. Çуллă çăварнипе сире!

ДАША. Сывă-и, Вася. Мĕн эсĕ?

ВАСЯ. Кăштах сыпрăм.

ДАША. Епле-ха капла, Вася! Ку таранччен санăн кун пекки пулманччĕ.

ВАСЯ. Хуйхăпа, Дарья Агафоновна, пысăк хуйхă-суйăхпа.

ДАША. Çитĕ сана калаçма, мĕн хуйхи пултăр санăн?

ВАСЯ. (пауза) Пур, Дарья Агафоновна, пур. Тӳсĕм çук хуйхă!.. Чим, тăхта, чун тăвăлса çитнипе юрă юрласа ярам-и? Юрать-и?

ДАША. Юрла.

ВАСЯ. (Юрлать)

Эх, савсам мана, пикеçĕм, сар пике,<br>Каччăна эс савсам.

ДАША. Вася, Вася, тетĕп, мĕнле хуйхă санăн?

ВАСЯ. Каламастăп, темле ыйтсан та каламастăп. Хăть çакăнтах пус, кас –каламастăп.

ДАША. Аплах каламалла мар пулсан, ан кала.

ВАСЯ. Тем ту – каламастăп… (Юрлать)

…Каччăна эс савсам,<br>Эпĕ саншăн тунсăхлап<br>Кунĕн-çĕрĕн ман пике…

ДАША. Турă санпа, ан кала эппин. Эпĕ ыйтмастăп та.

ВАСЯ. Юрамасть, хушман… Сав тери хыттăн асăрхаттарчĕç…

вĕлерет вăл мана.
ДАША. Кам?
ВАСЯ. Пĕр çын. (Юрлать)
…Çулăмпа çунатăп.
ДАША. Вася, Вася тетĕп, эпĕ санран пĕр сăмах ыйтсан, калатăн-и?
ВАСЯ. Ыйт.
ДАША. Āçта çӳрет Петр Ильич? Эсĕ унпа пĕрле пулман-и?
ВАСЯ. Āна калама юрамасть. (Юрлать)
Мана сана юратма,
Юратма хушмаççĕ,
Çич ютсем чараççĕ.
ДАША. Вася, эрех ĕçес килмест-и? Тыт-ха, ĕçсе пар.
ВАСЯ. Аюк, хăратăп!.. Атте пĕлсен уй-уй-уй! Çут тĕнчере те ан пурăн!..
Эп ахаль те кăштах сыпрăм… Çавăнпа та, иртсе кайтăр тесе, сирĕн пата кĕтĕм… унсăрăн хăратăп… атте пĕлесрен… лекет!
ДАША. Эсĕ пирĕн патра кăштах выртса кан та иртсе каять. Нимех те мар, ĕçех.
ВАСЯ. Пĕр черкке тытса парас пулинех.
ДАША. (черккене тултарса) Ĕçех, Вася, нимĕн те пулмасть.
Вася ĕçет.
Апла эсир ăçта çӳренине каламастăн.
ВАСЯ. Калăттăм та – пултараймастăп: хушман.
ДАША. (хăраса) Кам хушман? Мĕншĕн хушман?
ВАСЯ. Хушман тетĕп пулсан хушман ĕнтĕ. Çăвара уçсанах вĕлеретĕп, тет! Ан та ыйт, Дарья Агафоновна, çав çавах нимĕн те каламастăп.
ДАША. Юрĕ-çке, юрĕ, текех ыйтмастăп. Вася, ĕç тепĕр черкке.
ВАСЯ. Тавтапуç, анчах урăх ĕçместĕп. Çитет… унсăрăн та пуç çаврăнать… Эпĕ аттерен хăратăп.
ДАША. Каларĕ те, аттерен! Мĕн хăрамалли? Халĕ çăварни (тултарать).
ВАСЯ. Капла, чанах та, ĕçсе супма пулать (ĕçет).
ДАША. Нимĕн те пулмасть. Епле чипер эсĕ, Вася… сана хĕрсем юратаççĕ пулмалла… Пăх-ха çӳçӳсем мĕнле кăтра! (Пуçĕнчен ачашлать). Мĕнле, хĕрсем юратаççĕ-и? (Эрех тултарать).
ВАСЯ. Хĕрсем мана шутсăр юратаççĕ. Анчах та пĕри, вĕсенчен чи илемли, мана тиркерĕ… Паллах, леш каччи, вăл аслă… çулĕсемпе

те, суту-илӳ тĕлĕшĕпе те, анчах мĕншĕн çынран мăшкăламалла?
ДАША. Мĕншĕн сана çав териех кӳрентермелле пулнă-ха?
ВАСЯ. Вăл мана кӳрентерчĕ, манпа мыскара турĕ… Мыскарийĕ тата мĕнлерех! Хăй тата мана, хăйĕн тусĕ, çывăх юлташĕ, тет.
ДАША. Пăх-ха ăна! Малалла, Вася, малалла.
ВАСЯ. Эпĕ хĕр патне унччен малтан çынсене систермесĕр çӳреттĕм, мĕншĕн тесен атте пĕлесрен хăратăп… Лешĕ мана ярса тытрĕ те: ăçта çӳретĕн, тет… Çук, калама хушман çав, калама мар, çăвар уçма та ан шутла, тет. Унсăрăн, тет, эсĕ ухмах пуçупа арăма та…
ДАША. Вася, чунăм, эпĕ сана ун пек мар хитре хĕр тупса паратăп! Ĕç, Вася.
ВАСЯ. Ан ĕçтер эсĕ мана, тархасшăн, турă пул, ан ĕçтер… унсăрăн эпĕ, ӳсĕре пула, пĕтемпех каласа парăп, манăн, тус пулнă май, апла тума юрамасть… вăл та хушман… Ун чух тĕнчере ан та пурăн!
ДАША. Мĕнлерех хĕр тупса паратăп! Хĕр мар – пукане!
ВАСЯ. (ĕçет) Ну, юрĕ. Эпĕ пĕтĕмпех каласа паратăп… пĕтĕмпех…
Хама чăтма çук кӳрентернĕшĕн… чĕре патнех лартрĕ… Манран мыскара туре! Анчах та эсĕ ăна ан кала.
ДАША. Каламастăп, каламастăп.
ВАСЯ. Авă эсĕ ăçта çӳретĕн, тет. Эпĕ ăна: манăн пĕр илемлĕ хĕр пур, тетĕп, амăшĕпе пĕр çуртра пурăнать: çавăнта çӳретĕп, тетĕп… Грушенька ятлăскер. Хайхи, мана та хăвпа пĕрле ил, тет. Атя, тетĕп. Çапла эпир иккĕн çав хĕр патне чылай вăхăт çӳрерĕмĕр… темиçе хут та… ларатпăр, сăмах çапатпăр, пĕремĕксем çитеретпĕр… пурте йĕркеллех. Анчах асархатăп, вăл хĕр çумне çыпçăнма пуçларĕ, хăйне хусах тет.
ДАША. (хăранипе чакса) Ах, турăçăм!
ВАСЯ. Эсĕ, тет, асту, эпĕ арлă-арамлă пулни çинчен ан каланă пултăр!.. Хĕрĕн амăшĕ, паллах, ун енне туртăнать, мĕншĕн тесен вăл пуян. Юлашкинчен мана калать: эсĕ, тет, вĕçтер кунтан, вĕçтер те урăх ура та ан пуснă пултăр, унсăрăн вĕлеретĕп, тет! Аçуна та каласа паратăп, тет. Мĕн тейĕн кун хыççăн. Эпĕ чăн-чăнах та аттерен хăратăп. Юрĕ, тетĕп, эсă ман пуçа çиесшĕн эппин, тетĕп… Çи… Ман куççульсем сана та çитĕç-ха. Эпĕ, Дарья Агафоновна, эрнипе йăваланса макăртăм, паян акă, чун ыратнине тӳсеймерĕм, ĕçрĕм… Хама хам… хама хам ниепле те лăплантараймастăп.
ДАША. Ах, мĕн тăвас!

ВАСЯ. Эпӗ те ҫын вӗт, манӑн та чӗре, чун пур… Вӑл чултан мар, сисет, ыратать!.. Вӑл авланнӑ, эпӗ пӗр пӗччен… манӑн никам та ҫук…
ДАША. (тӑрать) Мӑнакка, мӑнакка.
Афимья кӗрет.

**<u>Вуннӑмӗш курӑну</u>**

Ҫавсемех тата Афимья.
ДАША. Мӑнакка, часрах мана ҫула пуҫтар… Эпӗ хам атте-анне патне каятӑп… Ҫуран, утса чупса каям та!...
АФИМЬЯ. Мӗн эсӗ?
ДАША. Манӑн тискер, мӑнакка, мана пӑрахнӑ!.. Унӑн еркӗнӗ пур, мӑнакка!.. Ав мӗншӗн вӑл килте тӑмасть.
АФИМЬЯ. Ой, эсӗ мӗн? Ах, мӗскӗн чун!
ДАША. Вӑл мар-и мана ӗмӗр тӑршшӗпех юратса пурӑнатӑп тесе турӑ умӗнче сӑмах параканӗ? Халӗ ав еркӗн тупнӑ. (Вася патне пырса ӑна силлет) Кам вӑл, мӗнле хӗр?
Вася чӗнмест.
Ҫывӑрать! Часрах, мӑнакка, часрах… Рогожскийне каятӑп та лав тытатӑп. Ӗмӗр тӑршшӗпех асап тӳссе пурӑниччен унпа пурӑнманни аванрах. Ҫитет, пурӑнтӑмӑр. Чипер юл, Петр Ильич…

## <u>ИККӖМӖШ ПАЙӖ</u>

Иртен-ҫӳрен кӗрсе выртмалли ҫурт.

**<u>Пӗрремӗш курӑну</u>**

Спиридоновна тата Яков.
СПИРИДОНОВНА. Юрӗ, юрӗ, кайса кӳл!
ЯКОВ. Апла пулсан, Анна Спиридоновна, сӗлӗшӗн эпӗ сана укҫине пӗтӗмпех парса татрӑм, пӗр пус юлмиччен.
СПИРИДОНОВНА. Татрӑн, татрӑн, урӑх калаҫу ҫук.
ЯКОВ. Вӑл ҫаплах та-ха… Халӗ мӗн… ҫӑварни эрни, пире кӑштах сыпмаллине парсан ҫылӑх мар.
СПИРИДОНОВНА. Сирӗнтен, жидсенчен, ахалӗнех вӗҫерӗнеймӗн ӗнтӗ. (Эрех парать)
ЯКОВ. (Ӗҫет те тутине шӑлать) Пысӑк тав сире.
СПИРИДОНОВНА. Бунькована ҫитсен лавне Чалӑш Мишкана паратӑн.
ЯКОВ. Ку тӗрӗсех ӗнтӗ, мӗн каламалли пур. Чалӑш Мишка, ыттисемпе танлаштарсан, вӑр-вартарах.

Груша кĕрет.

**<u>Иккĕмĕш курăну</u>**

Çавсемех тата Груша.

ГРУША. (Сиккелет, аллисене çапкалать) Ах, шăнса кайрăм-çке, тӳсме çук!

СПИРИДОНОВНА. Кам сана сивĕре тăма хушать? Килтен хăваласа кăларса яман пуль.

ГРУША. Урамра питĕ хаваслă-çке: каччăсем çӳреççĕ, хĕрсем çӳреççĕ, юрăсем юрлаççĕ, ниепле те пăрахса кĕме хал çук. Эпĕ кăштах ăшăнатăп та каллех тухатăп. Темшĕн паян мана хавас, чун савăнать.

СПИРИДОНОВНА. Савăнмасăр! Пирĕн мĕн пирки хуйхăрас? Пурăнасса япăх пурăнмастпăр, малалла тата лайăхраххине кĕтетпĕр. (Ямшăка). Эсĕ мĕн кунта сулланса тăратăн? Кайса кӳл.

ЯКОВ (Ĕнсине хыçса) Çав тери мĕн… çăварни кун… каяс килмест.

СПИРИДОНОВНА. Сирĕншĕн пулсан ĕçкĕ пултăр! Чуптар! Чуптар! (Āна тĕксе кăларса ярать) Леш пӳлĕмре купсасем лаша кĕтсе лараççĕ, кай-ха, эрех ĕçтер, хăнала. Шӳт ту вĕсемпе, сăмах вылят, лайăхрах суйса кăтарт. Вĕсем ăна юратаççĕ.

ГРУША. Пит кирлĕ пулĕ вĕсем патне кайма!.. Тытăнаççĕ çыпçăнма, чуп тума: тӳсме пултараймастăп! Мана хамăр каччăсем те утма памаççĕ.

СПИРИДОНОВНА. Санăн вĕсемпе калаçнăшăн ниçтан та катăлмасть пуль? Эпĕ ак купсасене юрататăп. Çак иртен-çӳренсем кĕмелли çурта акă вунă çул тытатăп, вунă çул вутра çуннă пек çунатăп, ку тĕлĕшпе пĕр арçын та манпа танлашаймĕ, çавăнпа та купсасене пайтах курнă. Эп аçуран питĕ çамрăкла юлтăм: ун чухне пирĕн çурт Буньковăраччĕ. Пырса тулатчĕç вара – ĕç, çи, савăн! Хисеплетĕп çавăншăн купсасене. Анчах чипер пул: чĕлхепе хăть те мĕн кала, аллусене ирĕке ан яр, акă мĕнле манăн йăла! Лешĕ… мĕнлеччĕ-ха? Петр Ильиччĕ-и-ха? Мĕн питĕ час çӳреме пуçларĕ.

ГРУША. Нимех те мар, çӳрет, вăхăт иртте рме. Хăвалама аван мар пек.

СПИРИДОНОВНА. Мĕншĕн хăвалас, тен кирлĕ те пулĕ. Эсĕ ăна, Груша, астар, илĕрт, анчах ытлашши ан çулăхтар. Авлан те, вара ĕçĕ те пĕтнĕ, арпа сăсăлĕпех пире улталаймăн, - те. Авланиччен çӳретĕр, кучченеç çĕклетĕр. Мĕн, вĕсем шăл йĕрнине анчах курмалла-им.

ГРУША. Ав эсӗ мӗнле? Пит кирлӗ пулӗ мана качча кайма. Халӗ хӗр чухне кӑшт ҫӳресе юлам-ха Арӑм пулсан кайран та йӑлӑхичченех пурӑнӑп-ха! Халӗ шухӑш ҫук чух ҫӳре, савӑн, хӗрупраҫ!
СПИРИДОНОВНА. Ӗмӗрех хӗр пулса пурӑнаймӑн ӗнтӗ, йӗркеллӗ пуян ҫынна качча тухатӑн та ак улпут майри пек ҫӳретӗн… Ух ти, эх ти!.. Мӗншӗн пурнас мар! Ӗҫсе ҫиме лартсах параҫҫӗ, ҫывӑрма вырӑнне сараҫҫӗ, авкаланса кӑна ҫӳре. (Каять)

**Виҫҫӗмӗш курӑну**

ГРУША. (пӗччен) Арӑм пулсан ҫӑмӑл мар! Упӑшкуна вӑлт, атат мӗнлереххи ҫакланать… Хусах чухне вӗсем пурте аван! Кайран хӗсӗрлеме тытанӗ тата. Хӗр чухне пурнӑҫ хавас, кашни кун уяв, мӗн чухлӗ ҫӳрес тен – ҫавӑн чухлӗ ҫӳре! Ӗҫлес килсен – ӗҫле, юрлас килсен – юрла!... кам та пулин килӗшет пулсан – кам пире тытса чарӗ? Хӗрсем пек чее халӑх ҫук. (Юрлать)
Хӗрлӗ чечек ӳстеретпӗр.

**Тӑваттӑмӗш курӑну**

Груша, Спиридоновна тата Петр.
СПИРИДОНОВНА. Акӑ сан пата хӑна ертсе килтӗм. Лар, Ильич. Кӗрӗкне хывса ҫак.
ПЕТР. Кирлӗ мар. Эпӗ сирӗн пата самантлӑха кӑна ҫула май кӗрсе тухас терӗм.
ГРУША. Мӗншӗн самантлӑха? Ларсамӑр.
ПЕТР. Кӑнтӑрла аван мар, сирӗн пата килсе ҫӳрекенсем кӗтӳпех – куракансем пулӗҫ.
ГРУША. Санӑн камран хӑрамалла?
ПЕТР. Эпӗ каҫхине килетӗп, ун чухне ларӑпӑр.
СПИРИДОНОВНА. Ларах, лар. Кунта никам та кӗмест. Каҫхине те кил, хапӑл тусах кӗтсе илетпӗр. Ӗҫер-ха эрех.
ПЕТР. Кӑмӑл ҫук.
СПИРИДОНОВНА. Ҫитӗ-ҫке сана, йӑлӑнтарма. Ӗҫ.
ПЕТР. Пар эппин (ӗҫет). Тавтапуҫ.
СПИРИДОНОВНА. Капла аван… сывлӑхшӑн пултӑр. Тӗрӗссипе каласан, шалтах халтан кайрӑм, ирӗн те каҫӑн та ӗҫкӗ, пӗрмай ӗҫкӗ: эрни ҫавнашкал мар-и. (Каять. Груша ун хыҫҫӑн алӑка хупать.)

**Пиллӗкмӗш курӑну**

Груша тата Петр.
ГРУША. Мӗн эсӗ паян ҫиллес?

ПЕТР. Манăн паян кăштах кăмăла хуçмалли пулчĕ, çавăнпа салху. Ĕçсем çавăн пек.
ГРУША. Эсĕ ан кулян. Мĕнле хуйхă пулма пултарать? Çапла-çав манăн шурă кавакарчăнăм. (Юрлать)
Пурнас пулнă каччăн ырă,
Вăл пĕлместчĕ тунсăха,
Çав хĕре курсассăн туйрĕ –
Тек пĕлмест вăл канăça!
ПЕТР. Эпĕ сана çав тери юрататăп! Эсĕ мана темĕнпе пуçа çавăрнă пулас, урăх нимĕн те мар.
ГРУША. Мĕн эсĕ! Чипер калаçах!
ПЕТР. Эсĕ мана çĕçĕпе чиксен те санран уйăрăлас çук!
ГРУША. Мĕн пулнă санпа?
ПЕТР. Телейсĕр çын эпĕ! Нимĕн те ăнланаймастăп, нимĕн те тавçăраймастăп. Пуçăм çаврăнсах каять. Куçа тĕтре хупланă пекех.
ГРУША. Мĕншĕн аплах? Кала.
ПЕТР. Кала мана тӳррĕн, пĕлем: юрататăн-и эсĕ мана е çук-и?
ГРУША. Ху курмастăн-им? Паллах, юрататăп.
ПЕТР. Çаплах-ши? Чăн сăмах?
ГРУША. (ăна чунтан ыталаса) Акă мĕнле юрататăп… акă!
ПЕТР. Груша, апла эсĕ мана юрататăн? Апла пулсан, ытти пурте çăва патне. Енчен эсĕ мана халь: маншăн чунна сут, тесен, çак самантрах сутатăп!
ГРУША. Мĕн эсĕ, мĕн эсĕ? аван мар! Ун пек сăмахсене калаççĕ-и? Тем вăхăтра персе ятăм. Авă, пирĕн тимĕрçĕ Еремка çавăн пек текех чунĕпе тупа таватчĕ, хăйне тамăк ылханĕпе ылханатчĕ… Мĕн тейĕн, ухмаха… Çапла пулса тухрĕ те!.. Туртса кайнă ăна лупас çинчи утă çине. Аран-аран илсе антарнă вĕт, пĕтĕмпех кукăрăлса ларнă. Киревсĕр çын мар-и çав Еремка! Мĕн пулман пулĕ унпа! Шыв вакĕнчен те ăна икĕ хут туртса кăларнă – вăл хăнк та тумасть.
ПЕТР. Мĕншĕн манăн пурнăçа шеллес? Манăн пуç пĕтнĕ пĕтнех, пултăрах! Кала мана, çутă хĕвелĕм, мĕн сана кирлĕ? Ылттăн, кĕмĕл, ахах чулсем-и? Хама саклата хуратăп та, сана мĕн кирлине парнелетĕп…
ГРУША. Ах, савнă тусăм, мана нимĕн те кирлĕ мар, хамăнах пурте çителĕклĕ. Ун вырăнне эсĕ мана, каччă, эпĕ сана юратнă пек юрат.
ПЕТР. Эх, хĕрача! Мĕн сăмаха сая яратăн! Куратăн вĕт эпĕ

мĕнлине! Ыйт, мĕн кăмăл пуррине! Хаклăрах парне ыйт!
ГРУША. Мĕн ыйтам-ши санран? Акă мĕн – килсе çӳре час-часах, пĕремĕк йăт нумайрах, парне хăю вăрăмрах, куçупа пăх ăшăрах, тата чуп ту хытăрах… Ха, ха, ха!.. Тата эпĕ акă мĕн ыйтасшăнччĕ: çĕрĕ илсе памăн-ши?
ПЕТР. Паянах иккĕ илсе килетĕп.
ГРУША. (Юрлать)
Парне мар-çке маншăн хаклă,
Хаклă санăн юрату!
Пирĕн, хĕрупраçсен пурин те… мĕн калас… туссем пур. Уявсенче асăрха-ха, мĕнле аван: пурте урамра пĕрле лараççĕ. Эсĕ акă нихăçан та манпа пĕрле тухмастăн. Çавăнпа та манăн та хама юратакан савнă тус пуррине ĕнентерме çĕрĕ те пулин пулмалла. Эсĕ паян иртерех кил, виçĕ лаша кӳлетпĕр те хĕрсене çуна тулли лартса юрă юрласа катаччи чупатпăр.
ПЕТР. Пар аллуна! (Аллине тытса) Апла пулсан, калаçса татăлтăмăр! (Груша аллине çапать, лешĕ пуçне суллать). Мĕн тума пире хĕрупраç! Эпир иккĕн каятпăр.
ГРУША. Апла та юрать!
ПЕТР. Пыратăн-и?
ГРУША. Мĕншĕн пырас мар?
ПЕТР. (Грушана чуп туса) Кăна эпĕ юрататăп! Вăт ку хамăрла! Кай-ха, пăх, пӳртре е килкартишĕнче никам та çук-и?
ГРУША. Ытла ан васка-ха. Ларсам кăштах.
ПЕТР. Халĕ вăхăт çук. Каç пирĕн.
ГРУША. Юрамасть пулсан, юрамасть. (Каять)

**<u>Улттăмĕш курăну</u>**

ПЕТР. (пĕччен) Ух! пурнас пулать! Мĕнле чиперккене çаклатрăм! Пире хĕрсем юратмаççĕ-и?
Груша кĕрет.

**<u>Çиччĕмĕш курăну</u>**

Петр тата Груша.
ГРУША. Каях, унта никам та çук, пĕр таçтан килнĕ карчăк кăна.
ПЕТР. Ну, сывă пул!
ГРУША. Сывă пул, ăмăрткайăкăм.
Петр каять.
Епле эпир, хĕрсем, чарусăр! Каччăпа кăштах ăшшăн калаçатăп та, вăл çыпçăнсах ларать, санран уйрăлма та пĕлмест. Анчах темĕн

вăл, хăш-пĕр чух çав тери кăмăллă, хавас, тепер чух ăнланма та çук? Унăн ăшĕнче темĕн пур пулас. Тен вăл темĕн усал шухăш тытнă… апла пулсан эпир аннепе ăна тӳрех алăк тĕлне кăтартатпăр, вăтанса тăмăпăр! Çапах, шел пулать, шут кăра пулсан та, юратса пăрахрăм ăна, чĕре те акă канăççăр, читлĕхри кайăкăнни пекех тапать.

Степанида кĕрет.

**<u>Саккăрмĕш курăну</u>**

Груша тата Степанида.

СТЕПАНИДА. Хĕрĕм, кунта сирĕн патра кăмака çумĕнче ăшăнасчĕ, юрать-и?

ГРУША. Āшăнах, инке.

СТЕПАНИДА. Эпĕ çакăнта тумтирпе михĕсене хурам-ха: çулĕ пирĕн çывăх мар, виçĕ талăк килтĕмĕр. Çулĕ халĕ, хăвах пĕлен, кăвакарчăнăм, çăварни çулĕ, сулхăнла. Ох, ох, ох! Мускава эпир, хĕрĕм, старикпе килтĕмĕр, хĕрĕмĕре курма, анчах ăçта тупмалла – пĕлместпĕр. Кăштах ăшăнатпăр та, çĕр каçатпăр та, ыран шырама тухса каятпăр.

ГРУША. Епле-ха апла эсĕ, инке, хăвăн хĕрӳ ăçта пурăннине пĕлместĕн.

СТЕПАНИДА. Мускавра эпир пирвайхи хут, вĕçне-хĕрне час тупма хĕн: вăхăчĕ те каç еннелле сулăнчĕ.

ГРУША. Мĕн, хĕрӳ кунта, Мускава, качча тухнă-им?

СТЕПАНИДА. (кăмака çумне вырнаçса). Вăл, хĕрĕм, акă мĕнле пулса тухрĕ. Пирĕн хула аслă çул çинче ларать: мещенсем эпир. Хамăр чухăн пурăнатпăр пулсан та пӳрт пысăк пирĕн. Çавна май хăш-пĕр чух пирĕн пата иртен-çӳрен купсасемпе улпутсем çĕр выртма кĕреççĕ. Пĕрре иртен-çӳрен çамрăк купса çĕр каçма юлчĕ те Дашăна апла та капла калаçса илĕртсе, ӳкĕтлеме пуçланă. Эпир ăна-кăна шутламан та. Иртнĕ çул, светки вăхăтĕнче, вăл ăна вăрласах кайрĕ.

ГРУША. Пăх-ха ăна епле?

СТЕПАНИДА. Вăрларĕ çав. Мĕн чухлĕ куççуль юхтармарăмăр пулĕ эпир. Анчах мĕн тăвăн, пулнине каялла тавăраймăн. Нумаях та иртмест, хĕрĕмĕртен хайхи çыру илетпĕр, Мускавран. Çырăвĕ халĕ те хам çумрах, акă… Хампа пĕрлех илсе çӳретĕп. Çырать хайхи: каçарăр мана, тет, пире ырă кăмăлпа пехиллĕр, тет. Мускава çитсенех эпир пĕрлешрĕмĕр, пурте йĕркеллех, тет, пурăнатпăр

аван, пĕр-пĕрне юратса.
ГРУША. Пăх-ха эсĕ, мĕнле телей! Пуян купсана качча тухнă! Телей!.. Сирĕн хĕрĕр илемлĕ пулас?
СТЕПАНИДА. Илемлĕ пулмасăр! …Халĕ мĕнле пĕлместĕп: тен, хуйхă-суйхă типĕтнĕ, унччен çав тери илемлĕччĕ, хўхĕм те çаврака… Ак сан пек.
ГРУША. Ман çумра мĕн илемли пур, кăмака милки çеç.
СТЕПАНИДА. Çук, ан кала, эсĕ илемлĕ хĕр, пур енчен те çыпăçуллă, сана та часах, курăн, маттур йĕкĕт качча илĕ.
ГРУША. Вăл вĕт, инке, телей мĕнле пулнинчен килет: хитре мар, телейлĕ çурал тенĕ.
СТЕПАНИДА. Эсĕ, хĕрĕм, çын телейне ан ăмсан. Эпир те, турă телей пачĕ, хĕрĕмĕр тĕлне йĕркеллĕ те ырă çын тупăнчĕ тесе савăннăччĕ. Епле саванас мар-ха? Анчах та çав çыру хыççăн хĕрĕм пирĕн пата нимĕн те çырмарĕ, унран пĕр сас-хура та пулмарĕ – те чĕрĕ, те вилĕ. Килсе курасшăнччĕ те, анчах кил-çурта никама шанса хăварма çук-çке: нумаях пулмасть акă иртен-çўренрен илтетпĕр, упăшки унпа япăх пурăнать, ирĕке чупать, ĕçкĕпе иртĕхет имĕш. Нимĕн тума та çук, ирĕксĕрех старикпе пуçтарăнтăмар та çула тухрăмăр. Унта, паллах, пуян çынсем, пире мĕнле йышăнасса пĕлместпăр: ашшĕ-амăшне хăваласа яракансем те пулкалаççĕ. Хĕрĕмĕршĕн çав тери тунсăхласа çитмерĕмĕр-и!.. Ĕçме-çиме пĕлместĕп, куççуль анчах юхтаратăп… Эсĕ, чĕкеçĕм, хăв шутласа пăх.
ГРУША. Çапла пулмасăр.
Агафон кĕрет.
**<u>Тăххăрмăш курăну</u>**
Çавсемех тата Агафон.
СТЕПАНИДА. Эсĕ мĕн тата, ашшĕ, час кĕреймерĕн?
АГАФОН. (Пиçиххине салтса). Лашапа аппалантăм: тăвартăм, вырăна тăратрăм, утă патăм. Выльăха шеллес пулать, унăн чĕлхи çук. Акă эпир, карчăк, турă пулăшнипе çитрĕмĕр, е, эсĕ пур,васкарăн. Мĕн тума вскамалла? Хуллен каян, инçе пулан.
СТЕПАНИДА. Манăн хĕрĕмĕре çав тери курас килмерĕ-и çав.
АГАФОН. Турă пулăшсан курăн-ха. Пурнăç вăл хăйĕн йĕркипе пырать, нихăçан та васкама кирлĕ мар.
СТЕПАНИДА. Кунта çитиччен çитессен туйăнмарĕ. Урасем ватă, унсăрăн пулсан çуранах тухса чупмалла.

АГАФОН. Мĕншĕн чупмалла? Ăçта чупмалла? Мĕн тума? Ухмах хĕрарăм. Эпир чипер, йĕркеллĕ çитетпĕр… Пур ĕçĕн те хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн йĕрки пур. Михĕрен пашалу кăлар-ха, кăштах çырткалар.
СТЕПАНИДА. (пашалу кăларса) Ме, тыт çемçереххине, тулне шăлу витеймĕ.
АГАФОН. Юрĕ-çке, юрĕ. Ку мана шăпах шăл çемми. (Чĕнмесĕр çиеççĕ).
СТЕПАНИДА. Мĕн тăвать-ши халь пирĕн Даша, хăрах куçпа та пулин курасчĕ.
АГАФОН. Мĕн тăвать? Паллах – хăйĕн ĕçне: унăн хуçалăх пур, унпа аппаланать: пирĕн пек мар, пуян çынсем.
СТЕПАНИДА. Епле йывăр пулĕ ăна, мĕскĕне, ют çемьере!
АГАФОН. Ют семьере мар, хăйĕн çемйинче.
СТЕПАНИДА. Ăна упăшки юратмасть тесе калаççĕ-çке.
АГАФОН. Çынсем мĕн каламĕç: эсĕ пур сăмаха та хăлхуна ан чик.
СТЕПАНИДА. Ах, мĕскĕн, пире курсан мĕнле савăнĕ!
АГАФОН. Паллах, савăнĕ. Çавах та, карчăк, унăн пирĕн, вată ашшĕ-амăшĕн куçĕ умне курăнма кăштах намăс пулмалла. Эсĕ мĕнле шутлатăн, е?
СТЕПАНИДА. Мĕншĕн намăс пулмалла? Ун айăпне тишкерме турă пур, эпир хамăр та çылăхсăр мар.
АГАФОН. Паллах, çылăхсăр мар… Çапах та, апла… ачисем ашшĕ-амăш сăмахне итлеменни… йĕркеллĕ япала мар.
СТЕПАНИДА. Мĕнех, Агафон Потапыч, ăна хăвах малтан каçартăн-иç.
АГАФОН. Епле каçармăн! Юрататăп-çке ăна, хĕрĕме, вăл пирĕн пĕрре çех. Кама юрататăн, ăна каçаратăн… Эпĕ тăшмана та каçаратăп, ăна та айăпламастăп. Çут тĕнчере айăппа тĕрĕслĕхе чухлакан эпĕ пĕччен кăна мар. Турă тата? Турă каçарать-и? Тен, çавна пула, ашшĕ-амăшне кӳрентернĕшĕн, упăшкипе япăх пурăнать те. Ăна ăçтан пĕлĕн?
Спиридоновна тата Даша кĕреççĕ.

**<u>Вуннăмĕш курăну</u>**

Çавсемех, Спиридоновна тата Даша.
СПИРИДОНОВНА. Халех, ырă çыннăм, халех. Кăштах тăхта, чиперккем. Лайăх лашасем кӳлсе лартаççĕ те сана самантрах илсе çитереççĕ. Ак çакăнта кăштах кĕтсе лар-ха.

ДАША. (сётел çывăхне ларса) Юрĕ, кĕтетĕп.
СПИРИДОНОВНА. Эсе мĕн, йĕместĕн пулĕ те? Аçу-аннӳне тем пулман пулĕ-çке?
ДАША. Çук, ахалех.
СПИРИДОНОВНА. Мĕн кулянмалли пур, халĕ çăварни вĕт. Курха, халăх чупать кăна. Çăварни çулталăкра пĕрре килет, ăна хисеплемесен юрамасть. Чăннипе каласан, ĕçкĕ хама та йăлăхтарса çитерчĕ, пуç çурăлсах тухать.
АГАФОН. Камшăн çăварни, камшăн тип эрни. Ох, ох, ох…
СПИРИДОНОВНА. Вăл çаплах ĕнтĕ. (Грушана) Груша, паçăрхи икерчĕсене кăмакана ларт-ха, кайран каçхи апата чухах пулĕç.
ГРУША. Халех, анне. (Ухват тытать).
СПИРИДОНОВНА. Шаларах ларт, шаларах. Тата ак çакна… çак чӳлмеке.
Груша чӳлмеке кăмакана лартать те ухват çине таянса тăрать.
ДАША. (куççуль витĕр юрланă пек)
Куккук кайăк эпĕ пулса, ай, вĕçем-и,
Атте-анне килне вĕçсе эп çитем-и.
СТЕПАНИДА. Мĕн ку хĕрарăм çав териех хурланать?
АГАФОН. Хуйхă пур пулас, çавăнпа хурланать.
ДАША. (малтанхи пекех)
Сад пахчинче турат çине эп ларам-и,
Куççуль витĕр хурланнипе, ай юрлам-и.
СТЕПАНИДА. Ку пирĕн мĕскĕн хĕр мар-и?
АГАФОН. Мĕн эсĕ, карчăк, кирлĕ мара сӳпĕлтетен.
СТЕПАНИДА. Кайса пăхам-ха (Даша патне пырать)
ДАША. (тăрать) Анне, эсĕ-им ку?
СТЕПАНИДА. Хĕрĕм!.. Хĕрĕм! (Даша ăна ыталать). Юратнă ачам, сар хĕвелĕм, çутă кунăм, ылттăнăм!.. (ларать) Потапыч, кил-ха кунта.
АГАФОН. (çывхарать) Мĕн унта сирĕн?
ДАША. (тăрать). Атте! Каçарăр мана ухмаха! (пуç таять)
АГАФОН. Мĕн эсĕ, мĕн эсĕ!.. Турă сана каçартăр, хĕрĕм, турă каçартăр!.. (ларать).
СТЕПАНИДА. Ăçта тĕл пулма тӳр килчĕ!.. Кĕтмен те, шутламан та…
ДАША. Ах, атте, мана сан куçу умĕнче тăма та намăс!
АГАФОН. Пулни-иртни çинчен мĕн сăмах хускатмалла!.. Турă

каçартăр! Эсĕ, хĕрĕм, ăçта кайма пуçтараннă капла?
ДАША. Сирĕн пата пуçтарăнтăм, атте.
АГАФОН. А, ку аван, аçу-аннӳне аса илни япăх мар. Мĕн, упăшку каях терĕ-и?
ДАША. Çук, атте.
АГАФОН. Епле-ха апла çук? Епле çук?
ДАША. Эх, атте, сирĕн умра ман пытарма юрамасть: малтанах эпир Петр Ильичпа пит аван пурăнаттăмăр, юрататчĕ вăл мана. (Груша тимлесе итлет).
Кайран ним сăлтавсăрах ĕçме, чупма пуçларĕ, килте тăмасть, манпа вăрçать кăна…
АГАФОН. Мĕнех вара, мĕнех вара?
ДАША. Кашни кун çуйхашу та харкашу. Ку та юрĕччĕ, вăл инкеке чăтса ирттерĕттĕм: хамах айăплă, атте-аннерен ыйтмасăр качча кайрăм. Анчах та вăл мана, аннеçĕм, тăван аннеçĕм, вăл мана урăххипе улăштарнă (Степанидăна мăйĕнчен уртăнать) Āçтан кăна чăттăр ман чĕре!
СТЕПАНИДА. Мĕн эсĕ, мĕн эсĕ, хĕрĕм?
ДАША. Паян ак, паян Вася, пирĕн пата çӳрекен каччă, каларĕ. (Аллине сулласа). Унăн тусĕ!... (Куççульпе) Манăн упăшка хăйне хусах тет. (Каллех хулпуççи çине йăванать).
ГРУША. (Ухватне пăрахса). Ах, анне, ах, ах!
ДАША. Уйăрчĕç мана савнă тусăмран.
ГРУША. Ай!.. Чĕрем!
ДАША. Уйăрчĕ мана унран чунсăр илĕртӳçĕ!
ГРУША. Анне! Эпĕ вĕт вăл чунсăр илĕртӳçĕ!
СПИРИДОНОВНА. Эсĕ мĕн йĕретĕн? Вĕсене кура-и?
АГАФОН. Эсĕ вара мĕн? Эсĕ вара мĕн?
ДАША. Эпĕ сирĕн пата пуçтарăнтăм, атте, каллех сирĕнпе пĕрле пурăнма, тăван атте-аннепе.
АГАФОН. Епле пирĕн пата? Мĕн тума пирĕн пата? Çук, кайрăмăр, эпĕ сана упăшку патне илсе каятăп.
ДАША. Çук, атте, каймастăп ун патне.
АГАФОН. Эсĕ ăнлан, айван, ăнлан, епле-ха эпĕ сана хам пата илсе каям? Вăл санăн упăшку вĕт? (тăрать). Кайрăмăр. Пулма пултарайман ĕç çинчен мĕн сӳпĕлтетмелли пур! Пуçтар карчăк, кĕрĕк-сăхманна… Епле-ха эсĕ, айван, упăшкунтан таратăн!.. Эсĕ мĕн, эпĕ сана шеллеместĕп тетĕн-им? Сан инкекне кура акă пурте

куççуль юхтарапăр та – çакă пирĕн пулăшу пулĕ! Урăх мĕнех тума пултарăп. Санпа пĕрле йĕме пултаратăп. Эх, ачам, эпĕ сан аçу вĕт, пепкеçĕм. (Чуп тăвать, йĕрет, кайран тумтирне илет те хĕрĕ патне пырать). Эсĕ çакна ăнлан, савнă хĕрĕм: турă пĕрлештерчĕ пулсан çын уйăраймĕ. Пирĕн аттесем те çав йĕркепе пурăннă – ӳпкелешмен, хирĕçмен. Эпир вĕсенчен аслăрах-им? Кайрăмăр упăшку патне. (Хĕрне аллинчен çавăтса тухса каять, Степанида вĕсем хыççăн).

**<u>Вунпĕрмĕш курăну</u>**

Груша тата Спиридоновна.

ГРУША. (йĕрсе). Анне, вăл авланнă çын вĕт!

СПИРИДОНОВНА. Кам вăл?

ГРУША. (сĕтел хушшине ларса питне аллипе хуплать) Петр Ильич!

**ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ**

**1 сцена**

**Иккĕмĕш пайри пӳлĕм**

**<u>Пĕрремĕш курăну</u>**

Груша сĕтел хушшинче ларать. Спиридоновна кĕрет.

СПИРИДОНОВНА. Мĕн эсĕ кунта пуçна усса ларатăн? Унта кӳршĕсем килчĕç, эсĕ пур, тухса та курмастăн.

ГРУША. Тухмастăп эпĕ вĕсем патне.

СПИРИДОНОВНА. Акă тата мĕн шутласа кăларнă!.. Кунашкал мĕн латти пур? Хăвах чĕнетĕн те, халĕ пытанса ларатăн.

ГРУША. Вĕсене мĕн!.. Вĕсене савăнăç.

СПИРИДОНОВНА. Ай турух, тупăннă кунăн хуйăх! Сур та ĕçĕ те пĕтнĕ. Тăхта-ха, тепре килтĕр кăна, кăтартатпăр эпир ăна, ларса тăма вырăн тупаймĕ… Текех аçа кушак пек мăрлатса ан çӳретĕр, хĕрсен пуçне ан çавартăр.

ГРУША. Мĕншĕн-ха халĕ те килмест. Пĕрех хут чуна кантарăттăм. Мĕн каламаллине пĕтĕмпех каланă пулăттăм! Куç умне курăн кăна!.. Тăхта-ха, путсĕр этем!

СПИРИДОНОВНА. Тупнă кампа çыхланмаллине!.. Пит кирлĕ пуль! Манăн йăли урăхла: хăлха чикки памалла та пуçран кăларса пăрахмалла! Уншăн шухăшлама тата!.. Сĕтел çине мăйăр кăларса ларт та хĕрсене чĕн. Çитĕ ухмаха ерме, куççуль тăкма!..

ГРУША. (тăрать те сĕтел çине çимĕçсем лартать) Паллах, уншăн

шухăшлама, куççуль тăкма та шел, анчах чĕрене хушма çук-çке. Ак тарăхнипе каятăп та мĕн пур сасăпа юрра тăсса яратăп! (Каять, хурлăхлă юрă илтĕнет)

**Иккĕмĕш курăну**

Спиридоновна, кайран Грушапа хĕрсем.

СПИРИДОНОВНА. Пултарать манăн Груша! Çамрăк чух хам та шăп та шай çавăн пекчĕ… Ытла çамрăк вăл, çавăнпа кăштах çӳрес килет. Мĕнех, çӳретĕрех, йăпантăр. Ку хĕршĕн амăшĕн пăшăрханма, е ыйхă татма кирлĕ мар, ăна часах улталаймăн. Хĕр мар, ылттăн!

(Ушкăнпа юрлани илтĕнет).

Ну, ман хĕрсен улах пуçланчĕ!.. Эх, ăçта ман çамрăк чухнехи кунсем, эпĕ те вĕсенчен юлман пулăттăм!

(Грушапа хĕрсем кĕреççĕ).

Мĕн эсир шăпах пултăр? Юрлăр, савăнăр, эпĕ акă халех сире валли икĕ çуна кӳлме хушатăп.

ХĂШ-ПĔР ХĔРСЕМ. Тавтапуç сире, Анна Спиридоновна! Ак савăнăç!

Спиридоновна каять.

ГРУША. Хĕрсем! Манăн паян савăнас килет! Паян çĕр каçипех катаччи чупатпăр, юрă юрлатпăр, ташлатпăр.

ПĔР ХĔРĔ. Мĕншĕн аплах?

ГРУША. Хам кăмăла йăпатас, чуна уçас килет. Е, мĕн каламалли пур. Хĕрсем, анне çук чухне эрех ĕçер мар-и? (Çӳлĕк çинчен эрех кăларать)

ХĂШ-ПĔР ХĔРСЕМ. Мĕн эс, мĕн эсĕ?

ГРУША. Çулне хам уçса паратăп. Ну, хам ĕмĕрте пĕрремĕш хут… (ĕçет). Ой, епле йӳçĕ! Мĕнле ĕçеççĕ ăна çынсем! Пĕремĕк парăр-ха. Пĕр çын кӳрентерчĕ, хуйха пусарма ĕçрĕм. Ĕçĕр хĕрсем, часрах, ан курнăçланăр! (Эрех парать, хăшĕсем ĕçеççĕ, пурте кулаççĕ).

Балалайка йăтса Еремка кĕрет.

**Виççĕмĕш курăну**

Çавсемех тата Еремка

ЕРЕМКА. Пирĕн килес, тĕпеле иртес! Хĕрсем, эсир пурте кунта-и?

ХĔРСЕМ. Ах, ах! Еремка килчĕ! Еремка килчĕ!

ГРУША. Эсĕ мĕн тума килтĕн? Чĕнмен хăна тутартан усал теççĕ.

ЕРЕМКА. Мĕн эсĕ? Паян мĕнле кун? Çавна аса ил! Хăв тата хуçа хĕрĕ тетĕн! Эсĕ мана малтан эрехпе хăнала, кайран эпĕ сирĕнпе

çылăх каçарттарма тытăнатăп. (Тутисене шăлать)
ХĔРСЕМ. Пăх-ха, мĕн кирлĕ ăна! Кĕтсех тăр.
ГРУША. (эрех черкки тыттарса). Ме, ĕç те ăçтан килнĕ унтах кай.
ЕРЕМКА. (ĕçет) Çук, халĕ ĕнтĕ ку çынна кăларса яраймăр, мана кунта та япăх мар.
ГРУША. Хăвăн ирĕкӳ, анчах та сана эпир хамăр ушкăна илместпĕр.
ЕРЕМКА. Илместĕр? Ан манăр, эпĕ тухатмăш, хирĕç пулсан тытатăп та янахăрсене пăрса яратăп.
ГРУША. Маттур, Еремка-а!.. Ларăр хĕрсем.
(Хĕрсем сĕтел йĕри-тавра вырнаçаççĕ).
Сана валли вырăн та çук.
ЕРЕМКА. Сетел хушшинче вырăн çук пулсан эп урай варринче те ларма пултаратăп, чаплă улпутах мар. (Ларать те юрласа ярать).
Эп ларатăп чул çинче,
Пуртă алă вĕçĕнче.
Ай люли, ай люли!
Пуртă алă вĕçĕнче…
ГРУША. Хĕрсем, мĕн ăна итлемелли пур, тăсса ярар хамăрăннине.
ХĔРСЕМ (юрлаççĕ)
Çулас терĕм, çулас терĕм, улăх курăкне,
Çулас терĕм, çулас терĕм, сарă чечекне,
Ан ятлăрсам, çулаймарăм, каçĕ çитрĕ-çке,
Ан ятлăрсам, ерçеймерĕм, савни килчĕ-çке.
Петр кĕрет.
ПЕТР. У, сирĕн кунта улах! Шăп та шай вăхăтра çитрĕм. Пурне те сывлăх сунатăп, хам та сирĕнпе пулатăп.
ГРУША. Тахçанах кĕтеттĕмĕр! Эпир халĕ çеç кушака ура сырса сире чĕнме ярас тенĕччĕ.
ПЕТР. Сывă-и, Груша! Сывă-и, манăн чиперккем! Сывă-и хĕрсем!
ГРУША. Сывах-ха, тепре куриччен!
ПЕТР. Ну, хĕрсем, ĕçăр-çийĕр, эпĕ кучченеç илсе килтĕм.
ГРУША. Ахалех чăрманатăр, пирĕн хамăрăнах пур, çыннăнне хапсăнмастпăр.
ЕРЕМКА. Вĕсене кирлĕ мар пулсан мана пар!
(Хĕрсем кулаççĕ).
ПЕТР. Мĕн эсĕ, Грушенька! Е санпа мĕн те пулин пулнă-им?
ГРУША. Манпа-и? Эрех ĕçнĕ, çавă çеç? (Кулать)

ПЕТР. Мĕн эсĕ, мĕн эсĕ? Килсем кунта чуп тăвар.
ГРУША. Кĕтсех тăр!
ЕРЕМКА. Купса! Эсĕ хĕре хуллентерех пăчăрта, антăхсах кайĕ тата.
Пурте кулаççĕ.
ГРУША. Итлĕр-ха, хĕрсем, эпĕ сире пĕр юптару каласа паратăп. Пурăннă тет пĕр хĕр. Юрĕ, тейĕпĕр, пурăнтăрах. Анчах вăл ухмах пулнă. Çав хĕр патне пĕр каччă çўренĕ тет те тем те пĕр каланă тет, анчах пурне те суйнă: эпĕ хусах, эпĕ пуян, апла, капла… Эпĕ сана юрататăп, сана качча илетĕп… Хăй тахçанах авланнă пулнă.
ПЕТР. (хаяррăн) Эсĕ мĕн, шут тăватăн е кулатăн?
ГРУША. Эх, ăçта намăсу?
ПЕТР. Е кам та пулин сўпĕлтетсе пачĕ-и? Кала тўррипе!
ГРУША. Сана çав-çавах мар-и?
ПЕТР. Сана манран сивĕтме юри суйса панă, эсĕ пур ĕненсе лартнă.
ГРУША. (кулать) Юрĕ! Суя пулсан суях пултăр. Эсех тăрĕс пул, анчах пирĕнпе ан пул. Еремка, тăлăх хĕр юррине юрлар.
ЕРЕМКА. Мĕншĕн юрлас мар.
ГРУША (юрлать)
Тăлăх хĕр, тăлăх хĕр, килсем ман пата,
Юрласам тăлăх хĕр, сирсем тунсăха.
ЕРЕМКА. Юрлама пит аван тутă хырăмпа,
Эпĕ мар-и, тăлăх хĕр, паян ир çимен,
Паян ир çимен, ĕнер каç çимен.
ГРУША. Каласа пар, тăлăх хĕр, пире юмахна.
ЕРЕМКА. Калаçма пит аван эрехе ĕçсен,
Эрехе ĕçсен, канлĕ çывăрсан.
Эпĕ мар-и тăлăх хĕр, пĕр тумлам ĕçмен,
Манăн мар-и, тăлăх хĕрĕн, пĕр чĕл çăкăр çук,
Пĕр чĕл çăкăр çук, тумлам яшка çук.
Купса яшка çиме укçа пар.
ПЕТР. Хăп ман çумран! (Кăмака çумне ларса) Пĕлесчĕ кам каланине, ахаль вĕçертмĕттĕм, ăс парăттăм, Ваçка мар-и? Вĕлереп ăна!
ГРУША. Ваçкана эпир куçпа та курман. Хăв айăплă пулсан мĕн çын çине йăвантармалли пур.
ПЕТР. (тăрать) Ан ĕнен, Груша, пустуй сăмаха. Никама та ан итле!

Пурте вĕсем ман тăшмансем, пире иккĕне уйăрасшăн, мана тĕп тавасшăн! Ан çунтар ман чĕрене, кала: шӳт тăватăн-им?
ГРУША. Çухал ман куç умĕнчен! Ĕлĕк ухмах пулнă, халь улталаймăн! Пирĕн улаха çеç пăсрăн! Вася килесчĕ хăть, вăл пирĕн кăмăла уçнă пулĕччĕ (Хĕрсене). Юрататăп сав каччăна, хĕрсем: çынран кулмасть, улталамасть, сăпай, ăна хисеп тума та пулать: хăш-пĕрисем пек суйма пикенмест, сăмахĕпе пĕр май пулса, ĕçпе урăх мар.
Вася кĕрет.
ПЕТР. Эсĕ мĕн тума килтĕн?
ГРУША. (Тăрать те Васяна алăран тытать) Эсĕ çын патĕнче ан хуçалан, ан хăвала. Иртех, Вася, ан хăра.
ВАСЯ. Мĕн тума, тет. Сана мĕн ĕç? Шут тытрăм та килтĕм. Мĕнех вара? Паян çăварни, манăн çын патне тухма та юрамасть-им? Пăх-ха ăна, епле маттур!
ГРУША. Мĕн эсĕ, Вася, мана чуп тумастăн? Пурне те чуп ту, паян çылăх каçарттармалли кун.
ВАСЯ. Ой, чăнах-и? (Пуринпе те чуп тăвать) Анчах вăл аттене каласа парать вĕт. Апла юрать-и?
ПЕТР. Мĕн тăватăр эсир манпа, пӳтсĕрсем! Е эсир мана тупăка хурасшăн-и?
ГРУША. Эсĕ хусах вĕт?
ВАСЯ. Паллах, хусах.
ПЕТР. Сывă пул, Груша! Анчах асту, манпа мĕн те пулин пулсан – çылăхĕ санра. Эпĕ хам пуçа шеллеместĕп, эсĕ ăна пĕлетĕн. (Алăк патне пырать)
ГРУША. Вася, мана качча илетĕн-и?
ВАСЯ. Эпĕ хаваспахчĕ, анчах атте темле-çке.
ГРУША. Эсĕ унран ыйт.
ВАСЯ. Мĕнле йăлăнăп та, ури умĕнче йăваланăп.
ПЕТР. (алăк патĕнче) Ну, Васька, асту! Эсĕ урăх куç тĕлне ан пул! Малтанах асăрхаттаратăп. Халĕ эпĕ хама хам та пĕлместĕп.
ВАСЯ. Мĕн эсĕ ман çумма çыпăçрăн? Чăн сăмах, эпĕ ахаль те чиперех-иç.
ПЕТР. Мĕнлине эпĕ хам пĕлетĕп.
ГРУША. Нимĕн те пĕлместĕн эсĕ! Эй, хĕрсем, катаччи чупма лашасем хатĕр. Кайрăмăр, хĕрсем, кайрăмăр, Вася.
ПЕТР. (ăна аллинчен тытса) Груша, атя пĕрле каятпăр.

ГРУША. Каятпăр пулмасăр!
ПЕТР. Кайрăмăр тетĕп сана.
ГРУША. Эсĕ мĕн, вăрă-хурах пек алхасатăн!
ПЕТР. Ниçта та ямастăп сана!
ГРУША. Санăн кăмăлу çапла пулĕ те, анчах ĕçÿ тухмĕ. Ытлашшиех алхасма ирĕк памăпăр. (Хуллен) Эсĕ мĕн, мана Вася каласа пачĕ тетĕн-им? Санăн арăму кунта пулчĕ. Халĕ ăнлантăн-и? Ак сана юмах тупсăмĕ!
ПЕТР. (пуçне ярса тытса) Арăм!
ГРУША. Юрласа ярар хĕрсем.
ПЕТР. Груша-а!..
ГРУША. (Васяна ыталаса) Юрă юрлăр, хĕрсем, пире çураçнă хĕрпе каччă пек хисеплĕр.
ЕРЕМКА. Мана та хăвăрпа пĕрле илĕр.
ГРУША. Мĕнле те пулин сансăрах кайăпăр.
Хĕрсем юрă юрласа тухса каяççĕ.

**<u>Улттăмĕш курăну</u>**

ПЕТР. (чÿрече патне пырать)
Сцена хыçĕнче хĕрсем юрлани, кулни, шăнкăрав сасси илтĕнет.
Кайрĕç! (Пуçне усса ларать)
ЕРЕМКА. Купса, купса тетĕп! Эпир санпа иккĕн таракансене сыхлама юлтăмăр пулас.
ПЕТР. (хуллен) Арăм кунта пулнă?! Мĕн тума килнĕ-ха вăл? Āна кам та пулин ертсе килнĕ… Кам та пулин ертсе килнĕ. (Кăшкăрса ярать)
Мĕн тăваççĕ вĕсем манпа? (Питне хупласа сĕтел çине тайăнать)
ЕРЕМКА. Купса! Мĕн эсĕ пуçна усрăн! Кăмăл пулсан, эп сан хуйхуна сирме пултаратăп.
ПЕТР. Мана шырама! Йĕрлеме! Ну, тăхта-ха! Апла пулсан, пурте çăва патне кайтăр! Халĕ эп ăна хам камне кăтартатăп!.. Халĕ мĕн курмаллине пĕтĕмпех курать!...
ЕРЕМКА. Санăн шăпу çапла пулас.
ПЕТР. Мĕн?
ЕРЕМКА. Санăн ĕçĕ çаплалла, урăхла тума май çук, тетĕп. Эсĕ пăрах, пуçна ан ват, унсăрăн хăвнах йывăр килет. Юрă юрласа парам-и?
ПЕТР. (ун çине пăхса) Юрă? Мĕнле юрă?
ЕРЕМКА. Акă мĕнле…(юрлать)

Пырса курсам ман пата, эх кума,
Хăна пулсам ман патра, эх, кума,
Хăна пулсам, хăна пулсам ман патра!
Ох, хаяр-çке, сан йытту, пит хаяр!...
Ох, хаяр, хаяр, хаяр, хаяр!
Ха-ха-ха, ха-ха-ха!..

ПЕТР. (тăрса) Вĕçтер кунтан, чĕрĕ чухне!...

ЕРЕМКА. Манăн ăçта каяс? Эпĕ кунти çын, санăн, акă, чăнах та, каймалли çех юлнă. Ĕлĕк сана кунта кĕтетчĕç, халĕ кĕтмеççĕ.

ПЕТР. Вĕлеретĕп.

ЕРЕМКА. Мана вĕлерсен хăвнах айăп пулать… Купса, эс пусса ан сур, шывĕ хăвнах ĕçме кирлĕ пулĕ.

ПЕТР. Хăп ман çумран, шуйттан! Сана мĕн кирлĕ? Кам эсĕ?

ЕРЕМКА. Ват кĕлмĕçĕн çĕтĕк хутаççин çĕнĕ саплăкĕ.

Петр ун çине пăхать.

Купса, эпĕ сăмах пĕлетĕп.

ПЕТР. Мĕнле сăмах?

ЕРЕМКА. Акă мĕнле: çав сăмахпа сана мĕнле кирлĕ – çавăн пек пулать.

ПЕТР. Эсĕ чăннипех калатăн-и е шӳт тăватăн?

ЕРЕМКА. Ку ман ĕç?

ПЕТР. Итле! Енчен эсĕ мана улталамастăн пулсан – ылттăн айне тăватăп.

ЕРЕМКА. Мĕншĕн улталас? Эпир сăпай çынсем – улталасса улталамастпăр, анчах хамăрăнне вĕçертместпĕр.

ПЕТР. Эс мана, юлашки кĕпене хывса ил, анчах ĕçе туса пар. Манăн пурнăç акă ăçта çитсе ларчĕ, куратни? (мăйне кăтартать).

ЕРЕМКА. Мĕншĕн кĕпе? Ĕçне тăватпăр та укçан тӳлетĕн: тухмасан кирлĕ мар. Малтанах акă кăштах сыпас пулать, кайран калаçма та çăмăлрах. Эсĕ, купса, паян ĕçнĕ те, çинĕ те пулĕ, сана калаçма çăмăл. Манăн акă хырăм та çурăм шăмми патне хăнана кайнă, пыр та типсех ларчĕ, чĕлхе те, тĕрĕсне каласан, çаврăнсах каймасть.

ПЕТР. (укça парса) Ме, кайса ĕç.

ЕРЕМКА. Эсĕ укçине пар, ĕçме ĕлкĕретпĕр, вăл пирĕнтен тармĕ. (Илет) Куншăн тавтапуç! Халĕ калаçма та юрать. Пахатăп та, купса, эсĕ аван çын, санпа туслашма юрать (Унпа юнашар ларать).

ПЕТР. Кала, ан кĕттер.

ЕРЕМКА. Тăхта. Ĕç вăл юмахра кăна хăварт пулать, пурнăçра апла

мар. Сан ăшунта хуйхă-суйхă, сана ăна тухатса панă: кунта юмăçсăр ĕç тухмĕ. Пур манăн ун пек çын, хăйне пăхма нимех те мар, анчах ĕçĕпе пултаруллă, манран ăстарах.
ПЕТР. Хăрушă!
ЕРЕМКА. Хăрушă пулсан каяр мар.
ПЕТР. Вăл хĕр чĕрине çавăрма пултарать-и? Мана юраттăр. Вăл мар манран, эпĕ унран кулам, ăш каниччен.
ЕРЕМКА. Пултарать: сав тухатмăш сăмахĕ пит хăватлă, унран пин çухрăма тарса та хăтăлаймăн. Кирлĕ пулсан, хĕрĕ тăван килĕнчен тухса тарать, сан пата çав-çавах пырать. Анчах та юмăç патне пушă алăпа кайма юрамасть. Эсĕ пĕр штоф эрех ил, тепĕр тенкĕ укçа чик.
ПЕТР. Апла пулсан, каяр.
ЕРЕМКА. Эс ытлашши ан васка, вăл ĕçе хăй вăхăтĕнче тăваççĕ. Халĕ вăл вăхăт çитмен-ха. Унччен каяр та кăштах сыпар. Санăн укçа пур-и?
ПЕТР. Эх, эсĕ те çав, тăмсай. Эпе сана хăналанă пек эс урăх ĕмĕрне те ĕçсе кураймăн!
ЕРЕМКА. Эп сана ĕçме май пур тĕле кăтартап! Вăт ĕçеççĕ те унта, чăтса тăр! Укçа кăна пултăр!
ПЕТР. Укçи пирĕн хамăрпа.
ЕРЕМКА. Апла пулсан аван. Кайрăмăр. Акă манăн та уяв çитрĕ. (Юрлать)
Эп сире хуйха сирме пулăшăп!
Эх, эп сире пулă-пулă-пулăшăп!
Каяççĕ.

**2 сцена**
Пĕрремĕш пайри декораци.
<u>**Пĕрремĕш курăну**</u>
Çурта йăтса Дашапа Афимья кĕреççĕ.
ДАША. Мăнакка, такам шаккать пек. Вăл мар-и? Кайса пăх-ха.
АФИМЬЯ. Асту вăл, кĕтсех тăр! Пĕрре ĕçке ерчĕ пулсан çĕр каçипех ĕçет ĕнтĕ. (Алăкран пăхса). Калатăп никам та çук тесе. Килет сана, кĕтсех тăр, ăна унта та кичем мар. Килте ларакан ача мар çав. (Çуртине сĕтел çине лартать).
ДАША. (сĕтел хушшине ларса). Ман юна ĕçет вал! Пурнăç-и ку, тахçанах каç пулнă, вăл халĕ те çапкаланса çӳрет.
АФИМЬЯ. Эсĕ мĕн ларатăн тата? Кайса çывăр, эпĕ ăна хамах кĕтсе

илетĕп. Инкеке пĕлме çук, тен, ÿсĕр килĕ те вăрçма, çапăçма тытăнĕ. Ыррине ан кĕт.
ДАША. Çук, вăл килмесĕр выртмастăп. Манăн, темĕн, чĕре вырăнта мар: унпа мĕн те пулин пулмарĕ-ши?..
АФИМЬЯ. Паллах, эрехрен ыррине ан кĕт… Ĕçке пула пуçне хурать те-ха.
ДАША. Ах, мăнакка, апла ан кала-ха, ахаль те хăрушă. (чĕнмеççĕ) Каçхи апат хатĕрлес пулĕ, тен ыйтĕ.
АФИМЬЯ. Апачĕ хатĕр, халь тесен халь сĕтел çине лартма пулать. Таçта, темле çынсемпе çыхланса ан кайтăр. Халăх тĕрлĕрен пулать: каçа хирĕç калани ан пултăр та, пĕр-пĕр пÿтсĕрпе çыхланĕ те, тем туса хурĕ. (Анаслать). Ха, епле анаслаттарать, инкек пуласса сиснĕ пекех. Инкек умĕн ыйхă пусать теççĕ… Е ватăлатпăр, çавна пула. Ахаль лариччен мĕн те пулин вуласа пар-ха, эпĕ итлем.
ДАША. (кĕнеке илсе). Мĕн вулам-ши? (итлет) Мăнакка, шаккаççĕ.
АФИМЬЯ. Чăнах та. (Çурта илсе алăк патне каять).
ДАША. (Алăк умĕнче). Вăл-и?
АФИМЬЯ. Ой, япăх. Инкек ан пултăр. Эс кайса пытан-ха. Çав тери ÿсĕр, мана курчĕ те упа пекех мĕкĕрсе ячĕ.
Даша каять. Петр кĕрет.
**<u>Иккĕмĕш курăну</u>**
Афимья тата Петр.
ПЕТР. (ларса) Апат пар!
АФИМЬЯ. Халех, ачам, халех! (Апат лартать).
ПЕТР. Краççын çут!
АФИМЬЯ. Мĕн тума? Пурте тахçанах çывăраççĕ.
ПЕТР. Мĕн каланине ту! Пĕтĕмпех çапса çĕмĕретĕп!.. Пĕр шăрпăк хăвармастăп!
АФИМЬЯ. Юрĕ-çке, ан çиллен, халех илсе килетĕп.
ПЕТР. (ĕçет). Манран кулма-и? Çук, ĕç тухмĕ!.. Култармастăп! Çитет мана, мăшкăларĕç, хăваласа ячĕç, халĕ эпĕ килте… Ну, тăхтăр-ха! Эпĕ сирĕншĕн ухмах мар! Пĕтĕм çурта кутăн-пуçăн çавăратăп! Эсĕ манăн мăнакка, эс мана ан чар. Унсăрăн… ух!.. Ан ахлат ман умра, ан тарăхтар мана! (Ĕçет). Кала тĕрĕссипе: арăм килтен тухса-и? (Чĕнмеççĕ) Кала! Эп санран ыйтатăп: кала!
АФИМЬЯ. Вăл мĕн, Петр Ильич, тĕрĕссине каласан, вăл пÿртрен тухрĕ темелле мар, пÿртрен мар, ашшĕ-амăшĕ патне, яланлăхах каяс терĕ.

ПЕТР. Ҫăва патнех кайтăр! Тасалтăр! Шăрши-мăрши те ан пултăр.
АФИМЬЯ. Анчах ҫул ҫинче ашшĕ-амăшĕпе тĕл пулнă та, каялла таврăнчĕҫ.
ПЕТР. Ман куҫ умне ан курăнтăр! Вĕлеретĕп! Хам алăсемпех пăвса вĕлеретĕп! Вăл ман тăшман, арăм мар! Мана паян пĕр ҫын ун ҫинчен каласа пачĕ, пĕтĕмпех каларĕ, вăл пурне те пĕлет, вăл тухатмăш.
АФИМЬЯ. Мĕн эсĕ? Тур ҫырлахтăрах! Кампа ҫыхланса кайнă эс? Мĕн пулнă санпа?
ПЕТР. Шăп! Вăл каларĕ мана: вăл санăн арăму мар, вĕри ҫĕлен терĕ! Ак, асам тымарĕсене те парса ячĕ… Шутсăр хăватлă… Тухатма, пуҫ ҫавăрма пĕлет… Мăнакка!
АФИМЬЯ. Мĕн, ачам, мĕн?
ПЕТР. Хăрушă мана, хăрушă!.. Лар манпа юнашар. (йĕрет). Кӳрентерчĕҫ мана! Никам та мана юратмасть, пурте кураймаҫҫĕ!.. Пурте мана хирĕҫ, арăм та, пурте.
АФИМЬЯ. Хăвах айăплă, кама ӳпкелешмелле.
ПЕТР. Эп ӳсĕр ҫапкаланчăк, эп апла-капла, вĕлерĕр мана, мана, вĕлерĕр! Вĕлерĕр, ҫăмăлтарах пулать. Кам мана хĕрхенет? Эп те ҫын вĕт! (Йĕрет).
АФИМЬЯ. Ну, юрĕ, ҫитĕ-ҫке, ҫитĕ!
ПЕТР. Манăн кăмăла мĕн хуҫать тетĕн эс? Груша ман пек маттура юратманни тетĕн-и? Мар, вăл урăххин арăмĕ пуласси мана кӳрентерет.
АФИМЬЯ. Мĕнле Груша синчен калатăн тата эс, аскăнчăк?.. Мĕнле Груша?
ПЕТР. Мĕнле Груша? Акă мĕнле Груша: ун пек хитре хĕр тĕнчипе те урăх ҫук! Эпĕ уншăн хам чуна сутрăм! Мĕнле манăн унпа уйрăлас? Пире иккĕне уйăрасшăн ав вăл.
АФИМЬЯ. Кам вăл? Кунта никам та ҫук.
ПЕТР. Васька!
АФИМЬЯ. Кайса ҫывăр-ха. Куҫу-пуҫу улшăнса кайнă ав.
ПЕТР. Вĕлеретĕп ăна!.. Арăм тата… вăл упăшкине хирĕҫ ан пытăр! Ăҫта арăм? Арăма кунта пар! Вăл ман арăм, ман чура!
АФИМЬЯ. Ҫук вăл: хăйĕн килне кайрĕ, ашшĕ-амăшĕпе.
ПЕТР. (сиксе тăрать те аллине ҫĕҫĕ ярса тытать) Ăҫта кайрĕ вăл? Эпĕ ăна тупатăп! Ҫĕр айĕнче, тинĕс тĕпĕнче пулсан та, ҫав-ҫавах тупатăп.

АФИМЬЯ. Āçта каятăн каçа кура? Ак ял кулли! Выртса çывăр.
ПЕТР. Эс мана ан вĕрент! Арăма туп!.. Арăма туп, тетĕп!
АФИМЬЯ. Вăл çук килте, ăçтан тупса парам!
ПЕТР. А, çук-и. Эп ăна тупатăп!
АФИМЬЯ. Пăх-ха, ăна пăх-ха! Ах, турă хута кĕрсе пырах, ах, тискер.
ПЕТР. Çук, апла мар, мăнакка, апла мар. Эп урăххине калатăп. Ĕçĕ акă мĕнре: енчен, эп авланман пулсан, Груша мана юратман пулĕччĕ-и? Эп ун çине авланаттăм. Апла пулсан, мана арăм кансĕрлет, вăл пур çĕрте те ман çула пӳлет… Çавăнпа эп ăна вĕлеретĕп те… çавăншăн вĕлеретĕп…
АФИМЬЯ. Мĕн тăвас унпа, шалтах аптрамалла.
Пулĕмре сасартăк Еремка курăнса каять.
Āна Петр кăна курать.
ПЕТР. А, тус-юлташ! Мĕн эс ман çине çавăн пек пăхатăн? Мĕн пăхатăн тетĕп? Арăмран мĕнле хăтăлмаллине ху вĕрентрĕн вĕт!
АФИМЬЯ. Кампа калаçать ара ку – никам та çук-ске. Тур хута кĕрсе пырах, тура ан пăрахах! Кайса пурне те вăратас пулин çеç. (Каять).
ПЕТР. (Еремкана). Мĕн тетĕн эс, а? Ав мĕн? Эп те çавнах каламастăп-и? Пĕрле каятпăр! Часрах, часрах! (чарăнать) Ха-ха-ха! Кулăшла çын эс! Çĕççи ак, алăра! (Каять).
**<u>Виççĕмĕш курăну</u>**
Агафон, Степанида, Даша тата Афимья (кĕреççĕ).
АФИМЬЯ. (Алăкран пăхса) Кайнă, кайнă! Алăксене те яр уçса хăварнă. Ун хыççăн çынсене ярас. (каять)
ДАША. Ак, анне, халĕ хăвах куртăн, ман пурнăçа!
СТЕПАНИДА. Ах, ачам, ачам, ах мĕскĕн чун!
АГАФОН. Тăхта, хĕрĕм, ан ӳпкелеш. Качча тухни нумай та пулмасть, пурнăç çине ӳпкелешме те тытăнтăн.
ДАША. Манăн мĕн ыррине кĕтмелли пур, ăна тăван ашшĕ те пăрахрĕ.
АГАФОН. Ашшĕ пăрахрĕ пулсан та, тен, Турă пăрахман. Чăт кăштах.
ДАША. Чăтăттăм та, анчах урăх чăтăм çук. Эп ăна айăпламастăп, пурăнтăр хăйне кирлĕ пек, анчах та урăх унпа пурăнаймастăп.
АГАФОН. Капла аван мар, капла аван мар! О-хо-хо! Аван мар! Эс ху тĕрĕс-им? Пире, карчăкпа иксĕмĕре пăрахса хăварса качча тухни

тĕрĕс пулчĕ-и? Кала-ха, ĕç турăн-и? Çапла тумаллаччĕ-и? Саккун-йĕрке тăрах, çапла тумалла-и? Тăшман сире хăй аллине ярса илнĕ! Эсир çынсем те мар тейĕн. Халĕ акă, тӳс ĕнтĕ, тӳс! Турă çылăхусемшĕн асап ячĕ пулсан, тӳс те ӳпкелешмесĕр йышăн. Унсăрăн мĕн пулса тухать-ха? Мĕн пулса тухать? Тухса тарасшăн! Йĕрке-и ку? Арăмĕпе упăшки уйрăм пурăннине ăçта курнă? Эс ăна пăрахса кайăн-ха, пĕччен хăварăн – вăл хăйĕнпе тем туса хурĕ. Кам ун чухне айăплă пулать, кам? Енчен чирлесе ӳксен, кам ăна пăхакан пулĕ? Ку сан тивĕçӳ вĕт. Тен, вилес умĕн санпа сывпуллашас тейĕ те, эс мăнкăмăлланса, тухса кайнă.
ДАША. (ашшĕ мăйĕнчен уртăнса) Аттеçĕм!
АГАФОН. Эс малтан шухăшла, хĕрĕм, тĕплĕн шухăшла. (Йĕрсе) Айван вĕт эпир, çынсем, çав тери айван!.. Çитменнине мăнкăмăллă!
Вася тата Афимья кĕреççĕ.
**Тăваттăмăш курăну**
Çавсемех, Вася тата Афимья.
ВАСЯ. Турăçăм, мĕн ку? Мĕн пулса иртет сирĕн?
АФИМЬЯ. Мĕн тата?
ВАСЯ. Мана хирĕç Мускав шывĕ хĕрринче Петр Ильич тĕл пулчĕ, хăй çав тери тискер, çĕлĕкĕ çук, аллинче çĕçĕ, чупать. Апла сисеймĕн те, вакка лексе путма пултарать.
ДАША. Мĕн ку? Турă хута кĕрсе пырах!
ВАСЯ. Ун хыççăн çынсене ярар хăть.
АФИМЬЯ. Пур еннелле те ятăмăр, урăх никам та çук.
АГАФОН. Хамăр каяр, туссем, хамăр.
ДАША. Кайрăмăр!
Петр кĕрет.
**Пиллĕкмĕш курăну**
Çавсемех тата Петр.
ПЕТР. (Ун-кун пăхкаласа) Кам кунта? Мĕнле çынсем эсир? Арăм!.. Чĕрĕ-и эсир е çук? Туршăн та калăр?
ДАША. Мĕн пулнă сана?
ПЕТР. Сирĕн умра тăма та тивĕççĕр эпĕ, пӳтсĕр! Тен, сире урăх курайман та пулăттăм, тавах ыр çынсем мана манман, кĕл тунă. Каçарăр мана, ырă çынсем. (чĕркуçленет)
АГАФОН. (ăна тăратса) Мĕн эс, мĕн эс? Петр Ильич! Тăр ура çине.
ПЕТР. Çылăхлă çын эп, çав тери çылăхлă!.. Сирĕн умра пĕтĕмпех

каласа парам, тен чуна уçсан çăмăлтарах пулĕ. Акă ĕçкĕ ăçта илсе çитерет: эп хам арăма вĕлерме шут тытрăм вĕт, пĕр айăпсăр вĕлерме. Çакăнта, ӳсĕрскер, алла çĕçĕ тытрăм та арăм хыççăн каятăп пек. Ман куçа темле асар-писерсем, палламан çынсем тĕл пулаççĕ пек. Эп вĕсем хыççăн, эп вĕсем хыççăн… Ăçта арăм, тетĕп. Вĕсем кулаççĕ те таçталла кăтартаççĕ. Эпĕ чупатăп, ухмах, тек чупатăп… Сасартăк, таста чан сасси янăраса кайрĕ… Эп алла çĕклерĕм кăна, куратăп Мускав шывĕн чăнкă çыранĕ хĕрринче, вакă умĕнче тăрах паратăп. Пĕр утăм пуссанах… Аса илме хăрушă! Халĕ те çан-çурăм сăрлатса каять. Хайхи хамăн путсĕр аскăн пурăнăç ывăç-тупанĕ çинчи пек курăнса кайрĕ! Ак сехре хăппи, тивĕçлипех ку мана. Çавăнта ĕнтĕ атте мана: чăнкă çыран хĕррипе çӳретĕн, тенине аса илех кайрăм. Чăнах та, тĕрĕс сăмах. Шăп вăл каланă пекех пулса тухрĕ. Ну, ку каçа виличчен те манмастăп. Атте, анне пурăнăр кăштах пирĕн патра!.. Ырă çынсем, пулăшăр мана хамăн çылăхсене каçарттарма!.. Атте патне те кайса килĕр, калăр ăна… хам унăн куçĕ тĕлне пулма хăяймастăп…
ПУРТЕ. Турă пулăшах сана.
АГАФОН. Ну, мĕн каларăм эп сана, хĕрĕм?
ДАША. (Петра ыталаса) Петр Ильич, чунăм!
Вĕçĕ.
Чаршав.

**Раздел II. Сценарии номинации «Лучшее культурно-массовое мероприятие культурно-досугового учреждения сельского поселения»**

**<u>Юськасинский сельский Дом культуры Моргаушского района</u>**

Егорова Надежда Изосимовна, Семенова Марина Александровна.

## Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕн Аркадий Алексеевич Андреевăн юбилей касĕ Юбилейный творческий вечер заслуженного артиста Чувашской Республики Аркадия Алексеевича Андреева

Залра экран вырнаçтарнă, экран çинче проекторпа А.А. Андреевăн пурнăçĕпе пултарулăхне сăнлакан мультмедийлă презентаци кăтартаççĕ.

<u>«Çуралнă кун» юрă, Алексей Анисимов юрлать.</u>
<u>Илемлĕ кĕвĕ çеммипе сцена çине ертсе пыракан тухать.</u>

Театр – вăл чун киленĕвĕ, театр – вăл чун ăшши, театр – вăл чун илемĕ, театр – вăл пурнăç.

Ырă каç пултăр хисеплĕ юлташсем, тус-тăвансем, театăра юратакансем!

Паянхи кун, пирĕн ентешĕмĕр, Тури Панкли ялĕнче çуралса ӳснĕ Аркадий Алексеевич Андреев хăйĕн сумлă юбилейне паллă тăвать. Эпир ăна тĕрлĕ спектакльте курса киленетпĕр, унăн çитĕнĕвĕсемшĕн савăнатпăр, хăпартланатпăр.

Ăста та тарават артист Аркадий Алексеевич культурăри тава тивĕçлĕ ĕçĕсемшĕн тата пултарулăх енĕпе нумай çул ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистчĕ хисеплĕ ята тивĕçрĕ.

Пурте пĕрле алă çупса сцена çине паянхи уяв хуçине Аркадий Алексеевич Андреева чĕнетпĕр.

<u>Илемлĕ кĕвĕ янăрать. Сцена çине А.А.Андреев тухать.</u>

Çак илемлĕ кĕрхи кун Аркадий Алексеевича саламлама хăнасем те килсе çитрĕç.

Сцена çине Муркаш район администраци пуçлăхне Ростислав Николаевич Тимофеева тата ял тăрăхĕн администраци пуçлăхне Анатолий Николаевич Кузьмина чĕнетпĕр. Тархасшăн, сире сăмах.

Салам сăмахĕсем.

Вĕсен саламĕпе пĕрле йышăнса илсемĕр илемлĕ, саламлă юрă. Кĕтсе илĕр, сирĕн умăрта Йÿçкасси культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнĕ.

Йÿçкасси культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕ «Саламлă юрă» юрлать. Юрă сăмахĕсене А.А.Андреев валли ятарласа ылмаштарса çырнă.

Сцена çине эпир Константин Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕн режиссерне Наталия Алексеевна Сергеевăна тата драмтеатр ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан, Йÿçкасси шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ юлташне Юрий Мефодьевич Владимирова чĕнетпĕр. Тархасшăн, сире сăмах.

Юрий Мефодьевич Владимиров тата Наталия Алексеевна Сергееван салам сăмахĕсем

Сире Чăваш академи драма театрĕн артистчĕ Надежда Кузьмина саламлă юрă парнелет.

Надежда Кузьминан юрă саламĕ.

Юбиляра саламлама Муркаш районĕн Централизациленĕ клуб системин ертÿçине Игорь Аркадьевич Смирнова тата информаципе методика центрĕн ертӳçине Надежда Изосимовна Егоровăна сцена çине чĕнетпĕр.

И.А.Смирнов тата Н.И.Егорова саламлаççĕ.

А.А.Андреева - юбиляра саламласа ятарласа çырнă саламлă сăвва вулаççĕ.

Саламлă юрăпа сирĕн умма Вăрманкасри фольклор ушкăнĕ

васкать.

Вăрманкассинчи культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕн саламлă юрри.

Аркадий Алексеевич пурнăç çулне Йӳçкасси вăтам шкулĕнче пуçланă. Кунтах тĕрлĕ кружоксене çӳренĕ, малашлăх çинчен ĕмĕтленнĕ. Халĕ Аркадий Алексеевича саламлама Йӳçкассинчи вăтам шкулĕн директорне Юрий Семенович Яковлева сăмах паратпăр.

Ю.С.Яковлев сăмахĕ.

Йышăнса илсемĕр шкул ачисенчен саламлă юрă.

Шкул ачисем илемлĕ юрă юрлаççĕ.

Кашнин çыннăн пурнăçĕ пĕрремĕш сăмахран, пĕрремĕш саспаллинчен, пĕрремĕш урокран, пĕрремĕш учительтен пуçланать. Саламлă сăмахпа Аркадий Алексеевичăн пĕрремĕш учительне Людмила Ивановна Кирилловăна сцена çине чĕнетпĕр.

Л.И.Кириллован сăмахĕ.

Аркадий Алексеевич, сире юратса та хисеплесе Йӳçкассинчи вăтам шкулта ĕçлекен учительсен коллективĕнчен илемлĕ ташă.

Чăваш ташшисенчен йĕркеленĕ попурри.

Саламлă сăмахпа сцена çине Йӳçкассинчи «Сипет» халăх театрĕн артистчĕсем васкаççĕ.

«Йăмрасем» тата «Кантăкран шаккарĕ хамăр ял каччи» спектакльсенчи сыпăксем.
Салам сăмахĕсем.

Саламлас текенисем, тен, татах та пур?

Хисеплӗ хӑнамӑрсем! Хаклӑ куракансем! Паянхи илемлӗ каҫ Чӑваш академи драма театрӗн артисчӗсем «Ялта пулман пӑтӑрмах» спектакль парнелеҫҫӗ. Эпир сире спектакль пӑхма савӑк кӑмӑл сунатпӑр.

«Ялта пулман пӑтӑрмах» спектакль.

Михаил Степанович ролӗнче – Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Аркадий Андреев.

Чыс та мухтав сире, театр ӗҫченӗсем, хаклӑ Аркадий Алексеевич! Кулленхи ӗҫӗр малашне те ӑнса пытӑр, ҫирӗп сывлӑх, ырӑ кун-ҫул, телей сунатпӑр сире.

Хисеплӗ куракансем, сире ноябрӗн 29-мӗшӗнче 18 сехетре Шупашкарти драма театрне Арсений Тарасов пьеси тӑрӑх лартнӑ «Юратӑва ҫул парӑр» спектакле пӑхма йыхравлатпӑр. Спектакльте пирӗн ентешӗмӗр Аркадий Андреев тӗп рольсенчен пӗринче вылять. Апла пулсан, Чӑваш академи драма театрӗнче тӗл пуличчен!

Чаршав хупӑнать.

**<u>Юнгинский сельский Дом культуры Моргаушского района</u>**

Кудряшова Людмила Меркурьевна, Толстова Лариса Павловна.

## Вечер отдыха «Яланах театр» («Всегда театр»)

Илемлӗ кӗвӗ янӑрать. Сцена ҫине ачасем тухаҫҫӗ.

**Ертсе пыракан**

Ырӑ каҫ пултӑр, хисеплӗ куракансем!

Ырӑ вӑхӑтпа чуншӑн канлӗ самант пултӑр, хаклӑ ҫыннӑмӑрсем! Сире ҫак залра курма яланах хавас. Ырӑ ҫынсем паян кунта, ҫавна кура, ҫӑлкуҫ пек кулӑ янӑратӑрччӗ залра. Паянхи «Яланах театр» кану каҫӗнче эпир Юнкӑри культура ҫурчӗ ҫумӗнчи «Юнкӑ» драмкружокӑн театр сезонне уҫатпӑр. (Фанфары!)

**Ертсе пыракан.**

Театр - вӑл пурнӑҫ илемӗ! Ҫӗр-ҫӗр ҫынна пӗр ҫӗре пуҫтарать те хӑйӗн илемӗпе тыткӑнлать.

Театр - асамҫӑ, пархатарлӑх шкулӗ. Поэзи хӗлхемне ҫутатса ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарать. Театрта вылякан та, куракан та пурнӑҫри мӗнпур ырӑпа усаллине туять. Савӑнӑҫне те, хуйхине те. Е хӗпӗртетӗн, сасӑпах кулатӑн… Е ҫав самантрах чӗрене темӗн пӑчӑртанӑ пек, сывлӑш пӳлӗнсе килет те, куҫран куҫҫуль юхса тухать…

Тӗлӗнтермӗш театр! Эпир те, хаклӑ куракансем, сире валли ҫак тӗлӗнтермӗш тӗнчен чаршавне уҫатпӑр. Савӑнӑр, кулӑр, тен, пӑлханмалли те пулӗ, пурнӑҫра шухӑшлаттаракан самантсем те пулӗҫ.

Апла, сцена ҫине артистсене чӗнетӗп! «Пасар мыскари» сценка.

«Пасар мыскари» сценка.

**Ертсе пыракан**

Хаклӑ куракансем, халӗ вара эпир сире Николай Сидоров ҫырнӑ «Пуҫа килсен-пуҫана» комединчи сыпӑка курма сӗнетпӗр.

«Пуҫа килсен-пуҫана» спектакӑльти сыпӑк.

**Ертсе пыракан.**
Кулни сывлăхшăн пите усăллă теççĕ. Çавăнпа та тухтăрсем ытларах савăнма, кулма сĕнеççĕ. Апла, сире валли Григорий Иштудов шӳтлĕ анекдотсем калать.
Анекдотсем, калаканĕ Г. Иштудов.

**Ертсе пыракан.**
Пурнăçра темĕнле шӳт те пулса иртме пултарать, ахальтен каламан пулĕ, театр-вăл пурнăç тесе. Çавăнпа та халĕ сире шӳт курма сĕнетпĕр. «Çĕлĕк».
«Çĕлĕк» шӳт.

**Ертсе пыракан.**
Халĕ эпир сире «Упрасччĕ аннене» сценка курма сĕнетпĕр.
«Упрасчĕ аннене» сценка.

**Ертсе пыракан.**
Хаклă çыннăмăрсем, паянхи каç манăн куракансене тав тăвас килет. Эсир сцена çинчи рольсенче вылякансене ырлатăр та, тен, хурлатăр та. Артистсемпе пĕтĕм туйăмсем витĕр тухатăр.Сцена çинче выляма вăй-хал паратăр.Тавах сире. Сире валли тепĕр шӳт - «Кин килчĕ».
Шӳт «Кин килчĕ».

**Ертсе пыракан.**
Сцена çинче - «Юнкă» драмкружока çӳрекенсем. «Статуя Апполон» шӳт.
«Статуя Апполон» шӳт.

**Ертсе пыракан.**
Галина Скворцова çырнă «Мыскарасăр туй пулмасть» комедири сыпăка курма сĕнетпĕр.

«Мыскарасăр туй пулмасть» комедири сыпăк.

**Ертсе пыракан.**
Хаклă куракансем, халĕ сире «Тăвас марччĕ йăнăш» сценка курма сĕнетпĕр.
«Тăвас марччĕ йăнăш».

Хаклă куракансем, халĕ эпĕ сцена çине çак сценкăн авторне тухма ыйтатăп - Алевтина Лаврентьевна Яргунькина! Тăвăллăн алă çупса кĕтсе илер-ха.
Тавах сире, Алевтина Лаврентьевна, çакăн пек шухăша яракан сценкăсем çырса куракансен чунне хумхатма пултарнăшăн. Малашне те çакăн пек, пурнăçра чуна хускатакан ыйтуллă сыпăксем кăлармалла пултăр. Тавах сире.
«Тюнькки, тюнькки» вĕçлетпĕр.

**Ертсе пыракан**
Хисеплĕ куракансем! Сирĕн умăрта Юнкăри культурă çурчĕ çумĕнчи «Юнкă» драмкружока çӳрекен артистсем пулчĕç. Драмкружок ертӳçи – Л.П.Толстова. Рольсенче вылякансем - Ольга Тепеева, Николай Ядыков, Александр Анчиков, Елена Шурнеева, Анатолий Яндимиров, Алевтина Яргунькина, Григорий Иштудов, Светлана Михалкина тата Людмила Кудряшова пулчĕç. Купăсçă - Меркурий Ягунов.
Çакăнпа эпир хамăрăн кану каçне вĕçлетпĕр. Тавах сире, пире курма килнĕшĕн. Тепре тĕл пуличчен!

**Малокамаевский сельский клуб**
**Мариинско-Посадского района**

Николаева Эльвира Анатольевна.

**Литературно-музыкальный вечер «Манăн чунра эсĕ – театр!»**

«Ырă каç пултăр, сире, хаклă ял-йышсем!
Чăваш çĕршывĕ – çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ, çĕр пин сăмах çĕршывĕ тесе ахальтен каламан пуль. Юрă юрлакан, тĕрĕ тĕрлекен, сăмах калакан пур чухне Чăваш çĕршывĕ нихăçан та пĕтмĕ. Эсир пурте пĕлетĕр ĕнтĕ кăçалхи 2017 мĕш çул Чăваш енре Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкĕ, Рассейре – Экологи çулĕ пулнине. Çавна май эпир Кайри Шĕнерпуçĕнчи культура çуртĕнче кăçал тĕрлĕрен уяв к тĕлпулу каçĕсем, куравсем ирттертĕмĕр. Пирĕн ялта та сахал мар вĕсем – тĕрĕ, сăмах, юрă ăстисем. Вĕсене халалласа йĕркелерĕмĕр çак курава, паллашма пултаратăр. Тата тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ уяв çывхарса килет - пирĕн Чăваш патшалăх академи драма театрĕ йĕркеленнĕренпе çитес кăрлач уйăхĕнче 100 çул çитет. Халĕ вара сăмах тата юрă ăстисемпе паллашма пурне те зала кĕме йыхравлатăп».
Павлова Тамара Гурьевна – нумай çул хушши вĕрентекен пулса ĕçленĕ, уяв каçне пухăннисене театр аталанăвĕн çул – йĕрĕпе паллаштарчĕ. Куракансем театр çинчен хатĕрленĕ сăнукерчĕксене тата паллă артистсен ĕçĕ – хĕлне сăнлакан кĕнекесене кăсăкланса пăхрĕç. Çавăн пекех Тамара Гурьевна чăваш театрне йĕркелекен И.С.Максимов – Кошкинский, пĕрремĕш киноактер Ольга Ырзем çинчен нумай çĕннине пĕлтерчĕ. Паянхи куна драма театрĕнче миçе артист пулнине, хăй пурнăçĕнче хăш артисчĕпе тачă çыхăну тытнине тимлесе итлерĕç пурте.
Ертӳçĕ сăмахĕ: «Пирĕн ентеш – драма театрĕн паллă артисчĕ – Андриян Николаевич Павлов. Унпа пĕрле Шуршăл шкулĕнче вĕреннĕ Петрова Людмила Николаевна аса илĕвне итлесе пăхар – ха».
Петрова Л.Н. сăмах калать.
Ертӳçĕ: «Эпир мĕн пĕчĕкренех театра çуреме юратнă, ырă туйăмпа аса илетпĕр артистсем çинчен. Халĕ итлесе пăхар – ха Мартынова Зоя Прокопьевна хай нумай çул каялла чăваш театрĕнче Андриян

Григорьевич Николаев космонавтпа пĕрле ларнине».
Мартынова З.П. сăмах илет.
Сцена çинчен чăваш театрĕнчи «Саламии», «Кай. Кай Ивана!» спектакльти юрă йĕркисем янăраççĕ.
Ертӳсĕ: «Мĕншĕн – ха сирĕн умра çак юрă йĕркисем янăрарĕç?
1934 мĕш çулта пирĕн Кайри Шĕнерпуç ялĕнче урапа – çуна тăвакан артель çумĕнче вулав çурчĕ уçăлнă, 1937 - мĕш çулта вара ялти хор йĕркеленсе кайнă. Вĕсене йĕркелесе яракансем – Павлов Петр Прокопьевич тата Альгеев Николай Николаевич. Пуçламăш классенче вĕрентекенсем Ермолаева Фёкла Ермолаевна, Щербакова Таисия Михайловна, Мусова Анна Владимировна шăпах хора çӳрекенсемпе çак спектакльсемпе хамăр ялта кăна мар, кӳршĕ ялти çынсене те лашасемпе кайса çуресе савăнтарнă, «Ялта», «Айтар», «Кай, кай Ивана» спектакльсене хапăл туса йышăннă ял çыннисем. Халĕ вара сирĕн умра «Вĕçсе кайсассăн кайăксем» юрă янăрать.»
Петрова Л.Н. – юрă.
Ертӳçĕ: «Çак юрă сăмахĕсенчен ăнлантăр пулĕ, сăмах атте – анне çинчен пынине. Пурте пĕлетпĕр кăçалхи çул Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкĕ пулнине. Аттепе аннене халалласа нумай – нумай сăвă, юрă кĕвĕленĕ. Çемьери телей çинчен, хутшăнусем çинчен тĕрлĕрен спектакльсем курма пулать. Пурнăç! Мĕнле илемлĕ те çепĕç сăмах вăл, калама та йывăр мар, анчах та пурăнма вара – питĕ йывăр. Пурнăç! Кам тата мĕн тума шухăшласа кăларнă – ши сана? – Юратма, йывăрлăха чăтса ирттерме, пурăнма! Халĕ сирĕн умра – Зоя Абанникова çырнă «Пурнăç – вăйă мар» пĕр пайлă спектакль».
«Пурнăç – вăйă мар» спектакль. Выляканеем:
Тарье –Кириллова Тамара Сергеевна,
Марье – Павлова Александра Аполлоновна,
Варук – Тихонова Любовь Ивановна,
Анжелика – Андреева Наталия Алексеевна,
Ванюк – Думилин Валентин Иванович.
Ертӳçĕ: «Мирлĕ пурнăç. Мĕн çиттĕр сана? 70 çул ытла эпир мирлĕ тӳпе айĕнче пурăнатпăр. Иртсе кайнă хаяр вăрçă çинчен аса илсен вара пĕтĕм чун – чĕре хускалать. Халĕ сирĕн умра – сăвă – «Салтак амăшĕ».
Николаева Э.А. сăвă вулать.
Ертӳçĕ: «Вăрçă суранĕсем нихăçан турленейми йĕр хăварчĕç кашни

çемьерех. Халĕ сирĕн умра Алевтина Нестерова çырнă «Утă çулнă вăхăтра» спектакльти хăш-пĕр самантсем».
«Утă çулнă вăхăтра» спектакль. Выляканსем:
Сăпани – Иванова Нина Ананьевна,
Илюш – Думилин Валентин Иванович.
«Илем» фольклор ушкăнне çӳрекенсем «Юрлать шурă çуçлĕ салтак» юрă юрлаççĕ.
Ертӳçĕ: «Кулăш - пирĕн пурнăçра питĕ пысăк вырăн йышăнать. Пĕр – пĕринпе кулса калаçни, шутлĕ камитсем курса савăнни çын сывлăхне самаях аталантарать, çын пурнăçне тăсма пулăшать. Халĕ вара шӳтлĕ камитсем курса савăнар – ха».
Шӳтлĕ камитсем: «Тухтăр патĕнче», «Анне, качча каятăп!», «Мĕн манса хăвартăм – ши?». Выляканĕсем:
Андреева Наталия Алексеевна, Думилин Валентин Иванович, Думилина Вера Тимофеевна, Павлова Тамара Гурьевна, Павлов Виталий Николаевич, Тихонова Любовь Ивановна.
Ертӳçĕ: «Çапла вара çак камитсенче пурнăçран илнĕ самантсемпе паллашрăмăр. Ахальтен каламаççĕ ĕнтĕ: «Театр – пирĕн пурнăç», - тесе. Пирĕн уяв каçĕ вĕçленсе пырать. Пирĕн Чăваш театрĕ 100 çул тултарнине пысăк хавхаланупа кĕтсе илесчĕ, çурĕр театра, юратăр артистсене. Ахальтен мар ĕнтĕ эпир калатпăр: «Манăн чунра эсĕ – театр!»
Ырă каç пултăр сире пурне те, тепре тĕл пуличчен!».